# Арăмĕпе упăшкин çулĕсем мĕншĕн икĕ еннелле авăнаççĕ? • 3 стр.


*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

27(949 ) №, 2016, утă/июль, 16

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

# ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


*ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ*

## Халăх пурăнсан – эпир те пурăнăпăр



**Алина Федорова, юрăç, эстрада артисчĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçи**

Кашни кунах руль умĕнче эпĕ. Çичĕ çул çӳретĕп машинăпа. Çул япăххи канăç памасть. Кашни утăмра – ланкашка, путăк-шăтăк… Вăрçăнмасăр, лăпкăн çӳреме те çук э… Районта кăна мар, хулара та çул-йĕр начар. Тепĕр чухне урапан дискĕ те авăнса тухать. Машинăпа мар, тракторпа çеç çӳремелле пирĕн çулпа. Мĕнех, «тимĕр урхамаха» шеллемесĕр пурпĕрех кашни кун ĕрĕхтеретпĕр. Тимĕртен вĕт – чăтать. Налукне вăхăтра тӳлесен те çатма пек çул-йĕр кĕтсе илесси пулмасть ĕнтĕ пирĕн çĕршывра.

Пурнăç ытла та хакланчĕ, йăлт хĕссе çитерчĕç. Ялтисене те, хуларисене те пурăнма питĕ йывăр. Иртен пуçласа каçчен пĕр çĕрте çеç тăрăшакан бюджет çыннисен /вĕсен шалăвĕ питĕ пĕчĕк/ епле пурăнмалла-ха? Тепĕр çĕре кайса пăртак укçа ĕçлесе илме вĕсен вăхăчĕ те çук. Ачашăн уйăхсерен тивĕçекен пособи те питĕ сахал, ăна пурте илеймеççĕ те. Уйăхри ĕç укçи пăртак çеç ытларах тухрĕ тăк – документсене каялла тавăрса параççĕ. Хваттершĕн, ытти тăкакшăн тӳлесен 10 пин тенкĕ шаларан мĕн тăрса юлать? Сывлăшпа пурăнмалла-им çыннăн? Пирĕн патшалăх ăçта пăхать-ши? Апатçимĕç хакĕ еплерех ӳссе кайрĕ. Тĕрĕссине калас пулсан, лавккана, пасара ĕçме-çиме туянма мар, курава çӳрет хура халăх. Ют çĕршывсене пулăшма вăй çитеретпĕр пулсан хамăр халăх пирки те пăртак шухăшламалла мар-им? Шалу ытла та пĕчĕккине пулах сиплев учрежденийĕсенче тухтăрсем çитми пулчĕç. Акă вĕсенчи черет вăрттăнлăхĕ мĕнре! Çавăн пиркиех чирлесен те тепĕр чухне больницăна тухса утас килмест. Кайран чир шала каять.

Халăх пурăнсан – эпир те пурăнатпăр. Вĕсемсĕр эпир, артистсем, никам та мар. Пирĕн чăваш халăхĕ тĕлĕнмелле ĕçчен. Вĕсене пăртак хавхалантармалла çеç. Тĕлĕнмелле мар-им, йывăр пулсан та кредит илеççĕ, пĕр-пĕринпе ăмăртса çĕнĕ çурт çĕклеççĕ, киввисене çĕнетеççĕ, пурăнмалли условисене лайăхлатаççĕ. Çакă савăнтарать мана. Анчах та укçа-тенкĕ çитмест. Пĕр уйăх тар тăкса ĕçленĕ Мускав укçи те пурăнкаламалăх çеç. 30-40 пин тенкĕ илсе килнипе аякка каятăн-и? Çапах та ыррине шанмалла, пуçа усмасăр пурин те малалла утмалла. Тăрăшсан, чунран вăй хурсан çитĕнӳ пулатех! Эпир, чăвашсем – вăйлă!

**Çанталăк**

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 16.07 | +27 | +18 |
| 17.07 | +25 | +21 |
| 18.07 | +26 | +18 |
| 19.07 | +27 | +19 |
| 20.07 | +28 | +20 |
| 21.07 | +28 | +21 |
| 22.07 | +25 | +19 |




## «Улмуççие кĕреплепе тураттпăр»

**Лăпкă та сăпайлă тата питĕ ăшă кăмăллă вăл. Мухтанма, ытлашши калаçма та юратмасть. Çĕнетӳ тапхăрĕнче – 1990-92 çулсенче – ялхуçалăх министрĕнче тăрăшнă Валериан Краснов Муркаш салинче пурăнать паян. Кунтан аякра мар вырнаçнă Москакасси ялĕнчи çурта та пăхса тăрать. Мăшăрĕпе Римма Алексеевнăпа унта эрнере икĕ хутчен çитсе килмесен чунĕ чăтмасть Валериан Семеновичăн. Темĕн тĕрлĕ пахчаçимĕç, улма-çырла çитĕнтереççĕ ялта. Питрав уявĕнче çырла çиме пире ятарласа хăй патне хăнана чĕнчĕ экс-министр.**

### «Инкене парăнмарăм»

– Хăш çул ăçта, кам пулса ĕçлени, мĕнле тав хучĕсене тивĕçни халăхшăн интереслĕ мар пулĕ. Чи малтан хам ачалăх пирки каласа кăтартмалла мар-ши? – терĕ манпа тĕл пулсанах Валериан Семенович.

Муркаш районĕнчи Катькас ялĕнче, пысăк та йышлă çемьере çитĕннĕ вăл. Чи кĕçĕнни, чи ачашши – 12-мĕшĕ – Валериан. Ашшĕ вăрçăран сывă мар таврăннă.

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене II çур çулшăн çырăнма ĕлкĕреймерĕр пулсан – ан пăшăрханăр. Утă /июль/ уйăхĕн 25-мĕшĕччен почта уйрăмĕнче е «Советская Чувашия» хаçатăн киоскĕнче çырăнсан – вĕсене çурла /август/ уйăхĕнчен илсе тăма пуçлатăр. “Чăваш хĕрарăмĕн” хакĕ: 295,35 тенкĕ.**



# Нушаллă-телейлĕ пурнăç

**Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкас Кĕçтемĕр ялĕнчи Мария Шаронова тăхăр теçетке ытла çул пурăнса хурине те, шуррине те сахал мар ас тивнĕ. Халĕ кермен пек çуртра хуçаланаканскер хăйсен килĕ пулманран амăшĕпе çын патĕнче сывăрнине куççульленмесĕр аса илеймест. Нушаллă-телейлĕ пурнăç çинчен каласа кăтартмалли те сахал мар Муркаш районĕнчи Елача ялĕнче çуралса ӳснĕскерĕн.**



### Кăмака хыçĕнчи икерчĕ

– Аннепе çынсем патĕнче пурăнаттămăр. Пĕр çул пĕрисем, тепĕр çул теприсем патĕнче хĕсĕнеттĕмĕр. Паллах, вĕсем патĕнче ахаль ларман – ĕçленĕ. Атте чирленĕрен ир вилнĕ. Унăн чĕрçи çинче ларни хушăран тĕлĕк пек тĕтрелле аса килет... – аса илĕве çапла путрĕ Мария Ананьевна.

Малтанласа Ананьевсен хăйсен кĕтес пулнă-ха. Кăна хĕрĕ те кăштах ас тăвать. Чӳрече умĕнчи пысăк сак тăрăх: «Ан илсе кайăр ман пӳрте», – тесе чупни те асĕнчех. Анчах ашшĕпе амăшĕ ăна сутса темшĕн хулана тухса кайнă. Арçын сусăр пулин те хурала вырнаçнă. Çемьене кĕтес те уйăрса панă. Анчах кил хуçи хытă чирлесен каялла яла таврăнма тивнĕ.

– Ялта аттен аккăшĕ пурăнатчĕ. Унăн пĕчĕк пӳрчĕ пурччĕ. Çавăнта тĕплентĕмĕр. Аттене часах больницăна илсе кайрĕç – вăл унтан таврăнаймарĕ. Халĕ, хам шухăшланă тăрăх, унăн варвитти пулнă пуль тетĕп. Витре çинчен анаймастчĕ вăл. Ватă карчăк вилсен анне çав пĕчĕк пӳртне мĕншĕн сутнă-ши? Пĕлместĕп, – ассăн сывлать ĕç ветеранĕ.

Саккăр тултарсан ача пăхма илнĕ ăна. Икĕ çул тăванĕсен тĕпренчĕкĕсене пăхнă вăл. Ашшĕн аппăшĕсем кăштах пуянрах шутланнă, кӳршĕ ялта пурăннă. Шăпах вĕсем чĕннĕ те Марийăна.

– Ача пулнăран мана пурте юрататчĕçха. Пĕрисем хăйсем патне усрава та илесшĕн пулнă – анне килĕшмен.

Шкула кайнине лайăх ас тăватăп. Директор тӳрех хăйĕн аллине илчĕ мана. Хам шухăшланă тăрăх – начар вĕренмен эпĕ. «Мария, задача шутласа пар-ха, пĕр касăк кукăль çитеретĕп», – тетчĕç. Кучченеçле пурне те пулăшаттăм, çĕр касма килне чĕнекен те пурччĕ. Вĕрентекенсем ăнланатчĕç çакна. «Каллех Ананьевăран çырса илнĕ», – тетчĕç. Йышăнмастăм.

Учительсем кĕпе тăхăнтартатчĕç, çăпата туянса паратчĕç. 7 класс пĕтерме шкул директорĕ Клавдия Тетерина пулăшрĕ. Хĕлле Ярапайкассинче шкултах юлаттăм. Тăван ял çырма урлă пĕр çухрăмра çеçчĕ-ха, апла пулин те шкулта хутнă кăмака çинче выртаттăм. Клавдия Ивановна çăкăр çитеретчĕ. Хăйĕн ватă амăшĕн кивĕ кĕписенчен тум ăсталаса паратчĕ.

Туссем те лайăхчĕ манăн. Клавăсем кăштах лайăхрах пурăнатчĕç. Анне енчен тăван та лекетчĕç-ха. Унпа пĕр михĕ çинче выртаттăмăр. Кăмака çинче рехетленекенсене амăшĕ икерчĕ пĕсерnĕ чухне кăмака хыçĕнчен вăрттăн çитеретчĕ. Упăшки вăрçăсран хăрана пулĕ, вăл çирĕпрех пулнă-тăр, ют ачана кам ытлашши çитертĕр? – иртнине аса илнĕ май хурланмалли самантсем куç умне темĕн чухлех тухаççĕ хĕрарăмăн.

### Путланнă ĕмĕт

7 класран 1941 çулта вĕренсе тухнă Мария Ананьевна. Унăн çав тери тухтăр пулас килнĕ. Шупашкарта акушерсен шкулне экзаменсăрах илнĕ ăна. Авăн уйăхĕ çывхарнă май пĕлтерӳ çырăвĕ çитнĕ. Шупашкарти акушерсен шкулĕ вырăнĕнче госпиталь йĕркеленĕрен ăна Çĕрпĕве куçарнă. Çапла хĕрачан вĕренесси путланнă. Укçатенкĕ çукран унта каяйман.

– Вĕреннĕ хушăрах ĕçлессе шанса пĕр шкулта тирпейлӳçе вырнаçнăччĕ. Пурăнма укçа кирлĕ-çке. Çапла Çĕрпĕве каяссси пулмарĕ, ĕçлесе çеç пурăнтăм. Шкулта пĕр пӳлĕм уйăрчĕç. Унта аннене те илсе кайрăм. Пĕр çулталăкран яла таврăнтăмăр, колхозра ĕçлеме тытăнтăм. Юрать тăвансем лайăххĕ. Каллех вĕсем патĕнче пурăнтăмăр, – сăмах çăмхине малаллах сӳтет Мария Шаронова.

Колхозра малтан сысна ферминче тăрăшнă вăл. Кайран – дояркăра. Икĕ çухрăм таран сĕт лесме çӳренĕ. Чĕлхи-çăварĕ те мая килнĕ-тĕр – çăмăллăнах вырнаçтарнă. Сĕт илекенсем те килĕштернĕ ăна, çавăнпах апата та чĕннĕ.

– Фермăра ĕçлеме тытăнсан кăштах лайăхрах пурăнма тытăнтăмăр пулĕ – ĕçлекенсене тырă паратчĕç те выçăпа питех асапланман. Килте йăваланса выртман вĕт, вырăнĕ те пулман.

Анне чирленĕрен колхоз ĕçне питех тухаймастчĕ. Пĕррехинче ăна вербовкăпа Свердловска çар заводне ярасса пĕлтерчĕç. Чирлĕ аннене епле ярăп? Вунултăри хĕр хам тухса кайрăм.

Заводăн хуçалăх пурччĕ. Мана бригадира лартрĕç. Ытти хĕрсем вырăсла пĕлместчĕç те. Чăвашсем 41-ĕнччĕ эпир – вĕсемпе ĕçлерĕм. Лайăх пурăнтăм. Уй-хирĕ пысăкчĕ, машинăпах çӳреттĕмĕр. Çулталăкран каялла таврăнтăм. Каллех – фермăна. Лайăх ĕçлесе килнĕ тесе тырă та пачĕç.

Тăлăхсене таçта та яратчĕç. Горький хулине торф предприятине икĕ хутчен те кайнă. ФЗОра та пулнă эпĕ. Слесаре вĕрентрĕç. Унтан та килтĕм. Ача-пăча ухмахрах – кил те çук хамăн, пурпĕр таврăннă. Анне патне килес килнĕ-тĕр, – каласа парать ăш пиллĕ хĕрарăм.

### Фермăран – вăрмана

Тăрăшса ĕçленине кура çамрăк хĕре ферма заведующине лартма йышăннă. Шăпах çавăн чухне яла вербовщиксем килсе кĕнĕ. Каçхине ыран пуçлăха лартасса пĕлтерсен ирхине Мария ялтан тухса кайать. 1946 çулта çапла Сосновкăри йывăç касакан завода кайса кĕрет. Унта малтан пĕр çулталăк вăрман касать.

– Вымпел пурччĕ, ăна йăтса çӳреттĕмĕр. Питĕ астарса ĕçлеттеретчĕç. «Маттур» тесе тата хытăрах ĕçлеме хавхалантаратчĕç.

Кайран мана вăрман маçтăрĕ пулма вĕренме ячĕç. Вăрман кастарттараттăм, турттарттараттăм. Пĕтĕмпех шута илсе пымаллаччĕ. Ун чухне колони çыннисем те ĕçлетчĕç. Хăраттăм вĕсенчен. Эпĕ çамрăк хĕр вĕт-ха. Итлеттермелле вĕсене. Çакăн пирки директора каларăм та урăх ушкăна куçарчĕ. Нумай çул ĕçлесе пурăнтăм çапла.

Çавăнтах пĕр каччăпа паллашрăм. Питĕ хытă ĕçлетчĕ. Ялан малтаччĕ вăл. Унпа – Алексей Кузьмичпа – 1948 çулта çемье çавăртăмăр.

Аслă хĕр Галя 1952 çулта çеç çуралчĕ. «Пирĕн ача пулмасть пуль», – пăшăрханатчĕ упăшкам. Пĕрремĕш пепкене тăвата çул кĕтнĕ-çке, – тет Мария аппа.

Кайран Вячеслав, Лена, Юрий тата Люба çуралнă. Хăй пĕчченех ӳснĕрен, никампа калаçма çукран ачисене тăван хыççăн тăван парнеленĕ вăл. Шел, Славкăран ĕмĕрлĕх уйрăлма тивнĕ.

Заводра çынсен шутне кĕскетсен Мария Ананьевна больницăра тирпейлӳçĕре ĕçлеме пуçланă, каярах регистратора куçнă. Унтан – завхоза. Ку тивĕçе вунă çул пурнăçланă вăл. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ урăх ĕçе куçма сĕнсен хĕрарăм столовăйсен ĕçне епле йĕркелемеллине тишкернĕ, ку тĕлĕшпе ятарлă пĕлӳ илнĕ. Ĕçĕ те тупăннă.

– Трест директорĕ Çĕнĕ Шупашкара – ун чухне ăна Спутник тетчĕç – куçарассине каларĕ. Унта столовăй уçма хушрĕ. Пырса кĕнĕ чухне пĕр баракпа пĕрремĕш тăвата çурт валли янă никĕс çеçчĕ паянхи пысăк хула вырăнĕнче. Урăх нимĕн те çукчĕ. Çапла çĕнĕ хулара ĕçлеме пуçларăм. Пĕр-икĕ çултан айăпа кĕтĕм – çынсене ĕç укçи нумайрах панă – кăларчĕç. Экспедиторта ĕçлеме тытăнтăм. Питĕ килĕшсе кайрĕ. Кайран ĕмĕре çак ĕçрех ирттертĕм, – пытармасть Мария Ананьевна.

### Арçури пек...

– Сосновкăрах пурăннă эпир. Малтан баракчĕ, кайран икĕ пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç. Экспедиторта ĕçлеме тытăнсан Шуркассинче /халĕ вăл ял çук, ун вырăнĕнче – «Химпром. – **Авт.**/ пĕр çуртра йышăнма ирĕк пачĕç. Унта малтан çăкăр пĕсернĕ. Çуртран кил туса кĕме сĕнчĕç.

Пăртак арçури пек пулнă пуль. Таçта та çитнĕ, такампа та пĕр чĕлхе тупнă. Пĕррехинче никам та тип çу тупса килеймест. «Кам пултарать – аслă товароведа лартатăп», – тет пуçлăх. «Эпĕ каям-ха эппин», – терĕм. Шупашкартан 10 пичке çу илсе килсе патăм. Çавранăçуллă пулнă çав.

Ĕçленĕ вăхăтра яланах ăннă мана. Хамран хам та тĕлĕнеттĕм. Чăнахах та – пурте пулса пыратчĕ. 1995 çулчченех тăрăшрăм. Ниçта та пĕр айăп та пулман. Ялан тӳрĕ кăмăлпа тăрăшнă, – тет Мария Шаронова.

Пĕр хушă Çĕнĕ Шупашкарта ĕçленĕ хыççăн экспедитор пулсах Шупашкара куçнă вăл. Амăшне те хăйĕнчен хăварман, ялах пĕрле пурăннă. Мăнукĕсене те Васса Игнатьевна пăхса ӳстернĕ. 1968 çулта вилнĕ вăл.

1972 çулта вара Мария Ананьевна мăшăрне пытарнă.

### «Ыйтни пĕтĕмпех пурнăçланчĕ»

– Пĕрле ӳснĕ, кумаллă тантăшăм Федосия Иванова ку ялта пурăнатчĕ. Вăрçăра та пулнă вăл, снайперччĕ. Астарса яла куçма сĕнчĕ. Вăл пулăшнипех 1989 çулта çĕр туянтăмăр. Çурт лартрăмăр. 1991 çулта пурăнма куçрăмăр, – кун-çулĕпе малалла паллаштарать хĕрарăм.

Ун чухне Мария Ананьевна урăх мăшăрпа – Виталий Сергеевичпа – пурăннă ĕнтĕ. Унпа вĕсем 40 çул юнашар ирттернĕ. Арçын уйрăлса кайни тăватă çул ĕнтĕ. Çавăнтанпа хĕрарăм Галя хĕрĕпе тата кĕрӳшĕпе пурăнать. 9 мăнукĕпе, 7 кĕçĕн мăнукĕпе тата кĕçĕн-кĕçĕн мăнукĕ куç тулли савăнать. Кĕçех вĕсен йышĕ ӳсессе кĕтет.

– Ачасем те питĕ маттур. Ӳркенмеççĕ. Малтан та пĕрмаях килсе çӳретчĕç, пулăшатчĕç. Халĕ те çавах, – ырлать ачисемпе мăнукĕсене амăшĕ. – Çак тарана çитсе çынпа вăрçăнман, сивĕ сăмах каламан. Тавлашмалли пулсан та чĕрре кĕместĕм, пăрăнса утаттăм.

Хамăрăн кил пулманран ачаранах ялан уйрăм çуртра пурăнма ĕмĕтленеттĕм. Сосновкăра чухнех уйрăм йăва çавăрас кăмăл пурччĕ. Анчах упăшкапа калаçса татăлаймарăмăр.

Çакна та ас тăватăп. Кукамай вилнĕ ун чухне. Аннепе кӳршĕ яла кайрăмăр. Кукка хăваласа кăларса ячĕ. Пĕчĕк ача мĕншĕн ылханнă-ха çавсене? «Сирĕн те çурт ан пултăрччĕ», – терĕм. Чăнахах та, куккасем те çунса кайрĕç – килсĕр юлчĕç. Хулара тирпейлӳçĕре ĕçленĕ чухне ман патра та пурăнчĕç.

Ачаранах Турра кĕлĕ тăваттăм: «Çынна çимелĕх çăкăр пар, ман валли те пултăрччĕ. Çынна тăхăнмалăх çи-пуç пар, ман валли те çиттĕрччĕ», – тесе ыйтаттăм. Чăнахах та çапла пулчĕ. Халĕ хам та çынна тăхăнтартаятăп-çитереетĕп. Ыйтни пĕтĕмпех çитрĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.

# Паян та вăл – вĕрентекенех

Клавдия мăнакăн вăталăх хĕрне Ольга Михайловăна Шураç ялĕнче, вăл ку тăрăхри шкулсенче ĕçлемен пулсан та, питĕ хисеплеççĕ. Ольгăн ашшĕ вăтам çирĕп хуçалăх тытакан Михалăн 5 ывăлтан виççĕмĕшĕ пулнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче «кулак» шутне кĕртсе вĕсен пурлăхне туртса илсе салатнă. 1937 çулта Прокопий манăн мăнакпа пĕрлешет. Вăрçă пуçланиччен Полинăпа Василий çуралаççĕ, арçын фронта тухса кайнă чухне арăмĕ тепĕр ача кĕтнĕ – Геннадий пулнă ку. Прокопий вăрçă хирĕнче пĕр çапăçу вăхăтĕнче снаряд çывăхра ӳкнине пула тăпра айне пулса аманать – килне таврăнать.

1946 çулта Ольга çуралать. Кайран – Аркадипе Елизавета. Прокопий Михайлович ĕмĕр тăршшĕпех платник пулса тĕрлĕ ялта йывăç çуртсем туса çӳренĕ. Сывлăхĕ те майлашăннăччĕ. Клавдия Егоровна, хăй тĕллĕн вĕреннĕ çĕвĕç, ял çыннисене кĕпе-йĕм çĕлесе паратчĕ. Асăмра: Мăнкун умĕн ун патĕнче çĕнĕ çи-пуç çĕлеттерес текенсем пысăк черет тăратчĕç. Вăл вăхăтра пир-авăр туянма тăрăшнă. Шураç ялĕнче виçĕ çĕвĕçчĕ: манăн мăнак, Мария Петрова тата Ефим Васильев.

Ольгăн аппăшĕ Полина Прокопьевна, Мăн Вылăри 7 çул вĕренмелли шкулта, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанашри вăтам шкулта пĕлӳ илнĕскер, Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтĕнче агрономи факультетĕнче, кайран куçăнсăр майпа педагогика институтĕнче биологи факультетĕнче ăнăçлă вĕренсе учитель пулса тăрать. Аппăшĕн тăрăшăвне сăнакан Ульки та ялти пуçламăш шкултан Мухтав хучĕпе вĕренсе тухать, Мăн Вылăри вăтам шкулта панă аттестатра та «5» тата «4» паллăсем кăна.

Хусанти медицина институтне вĕренме кĕмелли конкурс экзаменĕсенче балсем çитменнине пула Шупашкара ĕçе вырнаçать хĕр. Малтан вăл икĕ хутлă йывăç общежитире тирпейлӳçĕре ĕçленĕ. 17 çулти хĕрача ир-ирех 10 кăмака хутнă, коридор тата пӳлĕмсен урайне çунă. Çĕнĕ çул иртсен трикотаж фабрикине вырнаçнă. Çав вăхăтрах хăй тĕллĕн аслă шкулсене кĕмелли предметсемпе экзаменсене хатĕрленнĕ вăл. Çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче пединститутăн математика факультетне кĕмелли экзаменсене ăнăçлă тытса студентсен йышне лекет.

Аслă шкул хыççăн 4 уйăх Крымсарайкăри вăтам шкулта математика учителĕнче тăрăшнă. Элĕксем Ольга Прокопьевнăна ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма суйланă. Икĕ çулта вăл районти мĕнпур яла çитет, çамрăксен кун-çулĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллашать, вăхăта усăллă ирттерме сĕнӳсем парать. Тивĕçлĕ канăва тухиччен Урасксилтри вăтам шкулта, вĕсенчен 7 çул директорта, ĕçлет. Унăн наградисем те сумлă.

2002 çултанпа Ольга Прокопьевна – тивĕçлĕ канура. Апла пулин те ахаль лармасть, 11 тата 9 класран вĕренсе тухакансене экзаменсене хатĕрленме пулăшать. Каникул вăхăтĕнче пиччĕшĕн мăнукĕ Елизавета ун патĕнче пурăнать.

Аслă пиччĕшĕ йăмăкĕпе Ольгăпа 30 çул пĕрле пурăнчĕ, виçĕмçул утă уйăхĕнче пурнăçран уйрăлчĕ. Шăллĕ вилни 11 çул çитрĕ. Йăмăкĕ Елизавета, Шупашкарти медицина училищинче фельдшер специальноçне илнĕскер, пенсире пулсан та, халĕ те 2-3 çĕрте ĕçлеме ĕлкĕрет. Ольга Прокопьевна тăванĕсемпе, вĕсен ачисемпе, мăнукĕсемпе паян та çирĕп çыхăнура. 70 çулта пулсан та ĕне те усрать, ялти тăванĕсемпе пĕлĕшĕсене сĕтпе тивĕçтерет.

**Владимир ЕГОРОВ.**

Элĕк районĕ.



ÇЫРАВ

# Патшалăх çĕр ĕçченне пулăшасшăн

**Утă уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Федерацин патшалăх статистика службин ертӳçи Александр Суринов Шупашкар районĕнчи чылай объектра пулса ял хуçалăх çыравĕ мĕнле пынипе паллашнă.**

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май регион ертуçи çакна аса илтернĕ: 2006 çултанпа, «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ вăй илнĕренпе, Чăваш хутлăхĕнчи аграрисем 26 миллиард тенкĕлĕх кредитпа усă курнă. Çак тапхăрта çĕр ĕç культурине палăрмаллах çĕнетсе улăштарнă, хальхи техникăсемпе пуянланнă. «Аграрисене ятран пулăшмашкăн эффективлă мерăсем туса хатĕрлеме кирлĕ те ĕнтĕ ял хуçалăхĕнчи улшăнусем пирки пухнă кăтартусем», – палăртнă Михаил Игнатьев. – Çырав пĕтĕмлетĕвĕсене налук хумашкăн пухмаççĕ. Килти хуçалăха тытса пыни паян предпринимательлĕх ĕçĕ шутланмасть».

«Ольдеевская» агрофирма» АХО директорĕсен канашĕн председателĕ Евгения Беликова ял хуçалăх çыравĕ мĕнле пынипе интересленекен хăнасене – Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева, Федерацин статистика патшалăх службин ертӳçине Александр Суринова, ЧР ял хуçалăх министрне Сергей Артамонова тата Чăвашстат пуçлăхне Эльвира Максимовăна – теплицăсене кăтартса çӳренĕ, производство калăпăшне ӳстерме тата тăкаксене чакарма май паракан çĕнĕлĕхсемпе паллаштарнă.

Ун хыççăн хăнасем Шупашкар районĕнчи Çĕнĕ Тренкассинчи Павловсен çемйин килти хуçалăхне çитсе курнă. Владимир Петровичпа Светлана Александровна вăкăр самăртаççĕ, чăхсемпе кăркkасем усраççĕ, пахчаçимĕç, улма-çырла, чечек çитĕнтереççĕ. Александр Суринов массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсемпе тĕл пулмашкăн та вăхăт тупнă, çыравпа çыхăннă лару-тăрăва уçăмлатнă.



– Умра – Пĕтĕм Раççей халăхĕн 2020 çулхи çыравĕ. Хальхи çивĕч ыйтусенчен унччен хăтăлмалла, – палăртнă вăл. – Ял халăхĕ хуларинчен ырă та усă кăмăллăрах, çырава пуçаруллă хутшăнать. Çапах унăн та юн шайĕнче сыхланса юлнă сисчĕвленӳ пур: çывăх çыннисем пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркеленнĕ, Хрущев хуçаланнă тапхăрсене кӳренӳллĕн аса илни çынсен асĕнче юлнах: выльăх шутне е усă куракан çĕр лаптăкĕн виçине кура налука пысăклатмĕç-и? Халăха канăçсăрлантаракан шикленӳ туйăмне сирмелле: халĕ кăна мар, совет саманинче те çыравсенче уйрăм çын пирки информаци пухман. Вĕсемпе пĕтĕмлетӳ тумашкăн кăна усă кураççĕ. Персонификаци кăтартăвĕсен вăрттăнлăхне саккун хӳтĕлет. Хăшĕ-пĕри выльăх е хурт-хăмăр йышне тĕрĕс пĕлтермест, куçăхтарасран хăрать. Унашкаллисен чунне те ăшăтма пултармалла ыйтăм ирттерекенсен.

**Хамăр инф.**

ĔÇ СЫХЛАВĔ

# Аманакансен шучĕ чакнă

**Утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче ЧР ĕçпе социаллă хӳтлĕх министрĕ Сергей Дмитриев ĕç сыхлавĕпе çыхăннă видиоçыхăну мелĕпе йĕркеленĕ регионсен хушшинчи конференцие хутшăннă. Унта производствăри хăрушсăрлăхпа çыхăннă йывăрлăхсене, вĕсене мĕнле парăнтармаллине сӳтсе явнă. Регионсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарнă. Видеоконференцие РФ ĕçпе социаллă хӳтлĕх министрĕн заместителĕ Григорий Лекарев та хутшăннă.**

Производствăра аманнă тĕслĕхсен кăтартăвĕ Чăваш Енре федерацин Атăлçи округĕнче, Пенза облаçĕпе Тутар республики хыççăн, чи пĕчĕкки. Производствăри инкексенче аманакансен шучĕ республикăра кăçалхи 5 уйăхра, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 7,7 процент чухлĕ чакнă.

Професси чирĕсемпе аптрас, ĕçре аманас тĕслĕхсен шутне сахаллатас, рабочисен сывлăхĕпе пурнăçне упрас, ĕç условийĕсене лайăхлатас, хăрушсăрлатас тĕлĕшпе республикăра ятарлă «Ĕç условийĕсене лайăхлатасси, ĕç сыхлавне çирĕплетесси, ĕçлекенсен сывлăхне упрасси» программа пурнăçланать.

Ĕç сыхлавĕ çинчен калакан вĕрентӳ мероприятийĕсен шучĕ те çулсерен ӳсет. Кăçалхи 5 уйăхра кăна Чăваш Енри вĕренӳ центрĕсенче 4778 çын пĕлĕвне ӳстернĕ.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

ПУЛĂШУ

# Çамрăксене вĕрентĕç

**Çамрăк предпринимательсене пулăшмашкăн Чăваш республикине федераци бюджетĕнчен 3,9 млн тенкĕ тивĕçĕ. Кун пирки калакан хушăва РФ правительствинче утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче алă пуснă.**

Пурлăха федерацин «Экономика аталанăвĕ тата инноваци экономики» патшалăх программин «Пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарасси» çумпрограммăна пурнăçласа тĕрлĕ мероприяти ирттерме уйăрнă.

Çамрăк предпринимательсене пулăшма республика бюджетĕнчен тата 1 млн тенкĕ хывĕç.

Чăваш Енре «Эсĕ – предприниматель» программăна пурнăçа кĕртнĕ май вăйă тата тренинг шайĕнчи мероприятисем, вĕрентӳ тата бизнес-проект конкурсĕсем йĕркелесшĕн. 30 çул тултарман яшсемпе хĕрсене хăйсен ĕçне йĕркелеме вĕрентĕç, çамрăк предпринимательсемпе тĕрлĕ консультаци ирттерĕç.

**Елена СТЕПАНОВА.**

СПОРТ

# Ăмăртăва хатĕрленеççĕ

**Ирĕклĕ майпа кĕрешекен тăватă чăваш хĕрне çамрăксен Европа первенствине хутшăнма Раççей пĕрлештернĕ командин йышне кĕртнĕ.**

Яшсемпе хĕрсен континент ăмăртăвĕ Швецин тĕп хулинче иртĕ. Вăл утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче уçăлĕ те эрне вĕçĕчченех тăсăлĕ.

Раççей пĕрлештернĕ командин йышне тӳрех тăватă ентешĕмĕр кĕнине палăртма кăмăллă. Вĕсем – Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен 3-мĕш училищин воспитанникĕсем: Альбина Хрипкова, Евгения Захарченко, Ирина Алексеева тата ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен Канашри шкулĕнче вĕреннĕ Виктория Александрова.

Хĕрсем Раççей пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕпе, Олимп резервĕсен 3-мĕш училищин тренер-преподавателĕпе Наталья Смирновăпа халĕ Мускав çывăхĕнчи Чехов хулинче хатĕрленеççĕ.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Çулсем тĕрлĕ еннелле авăнчĕç сасартăк...

Татьяна НАУМОВА

**«Тухса кай! Яла кайса пурăн!» – илтĕнет тепĕр чухне аялти хутри хваттертен. Çĕнĕ кӳршĕсем, тăтăшах мар пулин те, тепĕр чухне вăрçăнаççех. Килте чашăк-тирĕк шакăртатмасăр пулмасть теççĕ-ха. Хĕрарăмпа арçын хушшинче тавлашмалли-кӳренмелли тупăнатех. Сăлтавĕ те тĕрлĕ. Кӳршĕсем упăшки эрех ĕçнĕрен вăрçăнни куç кĕретех. Арăмĕ тарăхăвне палăртнине хирĕç ӳсĕр арçын ăна усал сăмахсемпе кӳрентерет. Юрать-ха кун пек «уявсем» сайра çеç пулаççĕ «аялтисен». Унсăрăн хĕрарăмпа арçын пĕр-пĕринчен сивĕнсе çемье арканасси те инçе мар.**

**Пĕлтĕр республикăра 8803 çемье чăмăртаннă, 4025-шĕ саланнă. Статистикăна ĕненес тĕк, уйрăлусен 41 процентĕ мăшăрсенчен пĕри эрех-сăрапа, наркотикпа туслашнипе çыхăннă. Пурăнма хваттер çукки, мăшăр килĕштерменни, укçа-тенкĕ çителĕксĕрри, тăвансем хĕтĕртни, нумай вăхăт уйрăм пурăнни те – çемье арканнин сăлтавĕсем.**

**Хут уйăрттаракансен 25 процентĕ мăшăрĕ улталанине палăртать. Хĕрӳ туйăмсене айккинче шырани ЗАГСа кайма пĕр-пĕрне юратни мар, урăх сăлтав хистенипе те çыхăннă-ха. Мăшăрлану керменне хырăм каçăртса кĕрекен сахал-и? Е тата чылайăшĕ паян таса туйăма мар, укçа-тенке мала хурать. Паллах, кашнин – хăйĕн сăлтавĕ: çемье çавăрма та, ăна салатма та. Апла пулин те пĕр-пĕрне хисеплемелле пек те... Çук çав. Килте арăмпа пепке кĕтнĕ е упăшка ĕçлеме кайнă чухне тус-юлташпа ĕççе-савăнса çӳреме юратакан, ташă каçĕсене çитме кăмăллакан, каçхине киле пач таврăнмасăр çӳреме хал çитерекен упăшка-арăма «лайăх» тесе епле мухтăн-ха? Юттисем патне чупма та хирĕç мар вĕт кун йышши. Малтанхи савнипе те савăнсах тĕл пулать. Кунашкалли пĕр тĕслĕх çеç мар. Юратни, ача кĕтни е пурлăха хапсăнни çемье çавăрма хистет тĕк, уйрăлма вара çĕр-çĕр сăлтав тупма пулать.**

**Республикăра пулса иртнĕ инкек те çынсен асĕнчех. 22 çулти хĕр çулталăк каяллах çухалнăччĕ. Ĕç-пуçа ЧР Аслă сучĕ нумаях пулмасть пăхса тухнă. Хĕре çăмăл автомашинăна ирĕксĕрлесе лартнине куракансем пулнă. Пике виллине каярахпа Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пĕр пĕчĕк вăрманта тупнă. Экспертиза хĕре çĕçĕпе 18 хутчен кая мар чикнине палăртнă. Следстви ку ĕçре хĕрпе пурăннă арçынпа унăн хальхи арăмĕн алли пуррине тавçăрнă. Иккĕшĕ çамрăка вăрмана илсе тухнă. Упăшки хĕре арăмĕн куçĕ умĕнчех вĕлернĕ.**

**Хĕрарăм каласа кăтартнă тăрăх, вĕсем арçынпа 2004 çултах пĕрлешнĕ. 2011 çулта вара арçын вилнĕ хĕрпе пурăнассишĕн унран уйрăлнă. Вăхăт иртсен упăшки каялла таврăннă. Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ши çамрăкки? Пурăнма чăрмантарнă-ши? Çакăншăн çаплах хаярланмалла-ши?**

**Пăхман хĕвеле ирĕксĕр пăхтараймăн тет чăваш. Кăмăл пулмасан юраттарма çук. Пĕр-пĕрне савмасан, хисеплемесен сăпайлă та çын ăмсанмалла тĕслĕх пулма йывăр ахăр. Анчах пурнăçра темĕнле тĕслĕх те тĕл пулать. Упăшкин пусмăрне чăтса пурăнакан хĕрарăм сахал-и тата? Кашниех уйрăлма хал çитереймест вĕт.**

**Куславкка район арçынни те ĕççе ӳсĕрĕлсен арăмне час-часах хĕненĕ, çӳçĕнчен сĕтĕрнĕ. Прокуратура 38 çулти арçын тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă, айăплă тесе йышăннă, миравай суда ярса панă.**

**Республикăра 2014 çулта пулнă инкеке те чылайăшĕ ас тăвать-тĕр. Ун чухне 49 çулти Тăвай арçынни малтанах саккăрмĕш уйăх ача кĕтекен арăмне вăйлах хĕненĕччĕ. Çавна пула пепке тĕнчене вăхăтран маларах килнĕ. Ăна çуралма пулăшнă хыççăн арçын тĕпренчĕкне хут курупкана вырнаçтарса юр ăшне тухса чикнĕ. Пепке шăнса вилнĕ. Арăмĕ те сурансене пула темиçе сехет асапланнă хыççăн куçне ĕмĕрлĕхех хупнă. Виçĕ ача тăлăха юлнă.**

**Сăмах май, уйрăлакан мăшăрсенчен чылайăшĕ /28 процент/ 5-9 çул пĕрле пурăннă хыççăн çак йышăну патне пырса тухать. Çапла вара çемьеллĕ пурнăçран «хăтăлакансен» йышне ытларах 24-35 çултисем лекеççĕ. Эппин, чылай чухне çамрăксем уйрăлаççĕ тесе çирĕппĕнех палăртма юрать. Çапах та 20 çул ытла пĕр сукмакпа утакансем пĕр-пĕринчен йăлăхнине ăнланма йывăртарах. Вĕсем уйрăлакансен хушшинче – 12,4 процент. Пĕрлешнĕ хыççăн çулталăк та тӳсейменнисем – 4 процента яхăн.**

ЭКС-МИНИСТР

# «Улмуççие кĕреплепе туратпăр»

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

– Ун чухнехи пурнăç каламасăрах паллă, питĕ йывăррăн пурăннă эпир.

Хырăм пĕрмай выççăччĕ, йĕркеллĕ тумтир тăхăнса курайман. Темĕн тĕрлĕ курăктымар, çĕрĕк çĕрулми, крахмал çинĕ эпир, вăрçăччен кун çути курнăскерсем. Чи асра юлни – пĕрремĕш класа вĕренме кайни. Инке икĕ кун вĕлтренпе хĕне-хĕне шкула илсе кайрĕ. Аллинчен вĕçерĕнсе таратăп шухăскер, хăваласа çитсе татах çав усал курăкпа чĕпĕтет. Пиччен ывăлĕне Виталипе пĕрле вĕренес килнĕ-çке ман, унăн вара шкула кайма çулĕ çитейменччĕ. Инке икĕ кун апат çитермерĕ, юлашкинчен ывăнсах çитрĕ манпа, алă сулчĕ. Ачаран çирĕп кăмăллăччĕ эпĕ, тем пек ўкĕтлесен те парăнмарăм ăна. Çав вăхăтра анне ăçта пулнă-ши, вăл ятланине ас тумастăп. Мĕнех, текех каймарăм шкула, хампа пĕр çултисенчен тăрса юлтăм. Юлташа епле пăрахса хăварăн? Тепĕр çулхине хыçран вĕлтренпе хăваламасăрах Виталипе çавăтăнса, йăл-йăл çиççе утрăм шкула. Лайăх вĕреннĕ эпĕ, пĕчĕкрен химик пулма ĕмĕтленнĕ. Шкул пĕтерсен тўрех Хусанти химипе технологи институтне вĕçтертĕм, 1 балл çитейменнипе каялла таврăнма лекрĕ. Шупашкарти 1-мĕш училищĕре электромонтера вĕренсе тухрăм, тепĕр çулхине ял хуçалăх институтне çул тытрăм. Химик мар, агроном пулса тăтăм. Шел, ман чи çывăх юлташăм, пиччен ывăлĕ Витали, 62 çултах пирĕнтен уйрălса кайрĕ.

### «Савнă хĕре арăм турăм»

– 6-7-мĕш классенче вĕреннĕ чухне ташă кружокĕнче Риммăна «Полька», «Краковяк» ташланă эпĕ. Хам пек пĕчĕкскерне пĕрре курсах куç хыврăм. Каярах çырма урлă Шомике çул такăрлатрăм. Хунăм старик шутсăр лайăхчĕ. «Кĕр пўрте, шăнса ан тăр, кунта йăлтах хам куç умĕнче, урамра тепле унта?» – тетчĕ. – Пĕр-пĕрин патне иксĕмĕр мĕн чухлĕ çыру çырман-ши? Темиçе хутчен эпĕ те, вăл та мана пăрахнă. Çамрăк чухне тута усамасăр пулать-и вара? Эпĕ урăх хĕре килне ăсататтăм, вăл теприне каятчĕ. Пĕррехинче тата Римма патне иккĕн çитсе лартăмăр. Эпĕ те пăрахса утмарăм, тепри те килне васкамарĕ. Салтакран темиçе кунлăха отпуска килнĕскерне кўрентермерĕм, хĕрпе калаçса куртăр-ха терĕм. Пĕр кĕленче пушатрăмăр – Юра кайма та шухăшламасть. Хам тухса утрăм, тепре кĕме сăлтав пултăр-ха тесе перчеткене юриех пăрахса хăвартăм. Урамра пăртак тăнă хыççăн каялла кĕтĕм, хайхи каччă вырăнтан тапранмасăр ларать. «Атя пĕрле каятпăр», – тесен тин манпа пĕрле тухрĕ. Риммăна текех никама та памарăм, Юра салтакран таврăниччен хăвăртрах авлантăм. Урăххи вăрласа каясран шикленнĕ пуль çав. Юратсах çемье çавăрнă, савнăскернех арăм турăм. Ав 53 çул пĕрле пурăнатпăр. Икĕ çул каялла «Юратупа шанчăклăхшăн» медале те тивĕçрĕмĕр, – ăшшăн кулать Валериан Семенович.

### «Халăхшăн анчах ĕçленĕ»

Вăл хăйне чи телейлисен йышне кĕртет – мĕн шухăшлани унăн йăлтах пурнăçланнă. Институтран вĕренсе тухнă хыççăн ăна направленипе виçĕ çуллăха Мари республикине ĕçлеме янă.

– Хăвăртрах тăван тăрăха таврăнас килетчĕ. Шăпах пиччем Леонид Михайлович çав вăхăтра «Колос» хуçалăха ертсе пыратчĕ, вăл пулăшрĕ те мана, отпуска килнĕскерне, кунта юлма. Юхăннă, пĕтнĕ «Передовик» хуçалăхра председатель кирлĕччĕ. «Ку çамрăка агронома илетпĕр, анчах та ертўçине малтанхинех хăваратпăр», – теççĕ ял çыннисем. 3 хутчен пуху ирттерме пикенчĕç, халăхĕ килмерĕ. Маншăн 7 хутчен сасăлама лекрĕ. Мари республикине каялла каясран аран хăтăлса юлтăм çапла. Арканнă хуçалăхa ура çине çĕнĕрен тăратма тиврĕ. Çăмăл пулмарĕ паллах. Çулталăк хушшинче хама кăтартрăм, йăлт йĕркеленчĕ. Москакассинче 40 сотка çĕр пачĕç, унта çурт лартрăм. Пĕрремĕш ĕç укçи манăн 44 тенкĕччĕ, ун çумне тата 4 тенкĕ те 40 пус /пĕр куншăн – 10 пус/ хушăнатчĕ. Унсăр пуçне тырă, улăм илме пултарнă эпир. Вăл вăхăтра колхозниксем питĕ япăх пурăннă, хальхи пек техника тавраш пулман, йăлтах алăпа ĕçленĕ. Чăн та, вăхăчĕ те урăхлаччĕ çав, хамăр пирки шухăшламан, пĕтĕм чунтан халăхшăн, колхоза çĕклессишĕн тăрăшнă ун чухне, – хуçалăхра ĕçленĕ çулсене аса илет Валериан Краснов.

Каярах «Передовик» совхоз директорне, ун хыççăн Муркаш райкомĕн ялхуçалăх управленийĕн пуçлăхне, 1976 çулта Муркаш райкомĕн председательне çирĕплетнĕ. 1979-1990 çулсенче çанă тавăрсах Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче тăрăшнă.

– Ĕç укçи 220 тенкĕччĕ. Тракторист-комбайнер манран чылай нумайрах шалу илнĕ. Киле çурçĕр иртсен таврăннă та ирхи 4-5 сехетре тухса кайнă. Ĕç кăтартăвĕ кăмăла тивĕçтеретчĕ паллах. Мĕн чухлĕ çул сарнă, «кăвак çулăм» кĕртнĕ! Киле таврăнса та курман çав, арăм пĕлсех ятлать мана халь, – иртнĕ кунсене куçĕ умне кăларать Валериан Семенович.

Юнашар ларакан Римма Алексеевна калаçăва хутшăнмасăр чăтаймарĕ.

– Халăхшăн çеç ĕçленĕ вăл, килшĕн, çемьешĕн нимĕн те туман. Ачасене хампа юнашар çитĕнтертĕм, бухгалтерта тăрăшнă май ĕçе илсе каяттăм та пĕрне пĕр енне, теприне тепĕр енне лартаттăм. Ашшĕне курман та Сашăпа Эдик. Вĕсем ыйха путсан таврăнатчĕ, ачасем вăраниччен тухса каятчĕ. Мăшăр район тилхепине тытса пынă вăхăтра салара лавккасене ирĕклĕн кĕрсе тухма та юраман, мĕншĕн тесен пурте палланă, ытлашши калаçакансем яланах пулнă, Валериан Семенович çын хушшинче çўреме чаратчĕ. Пуçлăх арăмĕ пулма çăмăл мар, унăн упăшки çук, йăлтах пĕчен тапаçланма тивет. Халь ак ватлăхра кăна вăл ман çумра, – чунĕ çемçелнипе пăртак куççульленчĕ те хĕрарăм.

### Хăйне хирĕçле ĕçленĕ

1990 çулта Валериан Краснова ял хуçалăх министрне çирĕплетнĕ.

– Шăпах çĕнетў тапхăрĕ пуçланнă. Чипер ĕçлесе пынă çĕртенех колхозсене хĕссе фермер хуçалăхĕсем йĕркелеме тытăнчĕç. Халăх çакна питĕ хирĕçчĕ, ман та чун йышăнман. Çĕнĕ техникăна фермерсене тўлевсĕр, колхозсене хăй хакĕпе памаллаччĕ. Эпĕ çакна хирĕçлеттĕм. Çавăн пиркиех ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Николай Зайцев выговор та панăччĕ мана. Хам ял хуçалăхĕнче чылай çул ĕçленĕ май лару-тăрăва лайăх пĕлнĕ эпĕ, чун хытах ыратнă çав. Хама /!/ хирĕçле ĕçлеме тивнĕ министрта чухне. 5 çынна пăхăнмаллаччĕ манăн: обкомăн 1-мĕш секретарьне, обкомăн ялсемпе ĕçлекен секретарьне, обкомăн ялхуçалăх уйрăмĕн пуçлăхне, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председательне, ЧР Аслă Канашĕн Председательне. Районсене тухса çўреме те вăхăт çукчĕ. Пĕрмай канашлу иртетчĕ, хут ĕçĕпе нумай лармаллаччĕ, докладсене чылай чухне хамах хатĕрленĕ. Ун чухне урăх тапхăр хуçаланатчĕ, çĕршывра ыран-паян мĕн пулса иртессине никам та пĕлмен, – каласа кăтартать Валериан Семенович. Министртан хăй ирĕкĕпе кайнă вăл. Пĕррехинче Елчĕк районне кайсан питĕ хытă шăннă, çурăм шăмми чирĕ аптратма тытăннă ăна. Больницăра пĕр хускалми 19 кун выртнă вăл. Обком пĕрремĕш секретарĕ Александр Петров та, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Николай Зайцев та пырса кайнă ун патне. «Никам та кăларса яман мана. Тухтăрсем вăрăм çул çўреме юрамасть тенине шута илсе министртан кайма больницăрах ыйту çыртăм. Çийĕнчех Муркашри чăх-чĕп фабрикин директорне çирĕплетрĕç», – тет экс-министр.

### Кашти-кашти панулми...

Сăмах çăмхине темĕн пирки те сўтнĕ май 78 çулти Валериан Красновран вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ пирки ыйтрăм.

– Кашни кунах зарядка тăватăп, утатăп. Ирхине пăтă, пылпа е çырлапа хутăштарнă тăпăрчă çиетпĕр. Кăнтăрла тĕлне мăшăр яшка пĕçерет, шĕвĕ апата кунне пĕрре çимеллех. Шыв ытларах ĕçмелле, вăл организма тасатать. Вăрăм ĕмĕр хамăртан та нумай килет. Çулсем иртнĕ май вăй чакать çав, ав чĕркуççи те ыратать. Москакассине малтан кашни кун çўрекенччĕ, халь чун аплах туртмасть. Юрать, ачасем, кинсем пулăшаççĕ. Çапах та пахчара тăрмашни киленў кўрет. Хускану кирлĕ, пĕр вырăнта хытса лармалла мар, – палăртать Валериан Семенович.

Красновсен çемйи мĕнпур пахчаçимĕçрен ытларах помидор юратать. Муркашра та, Москакассинче те чылай лартнă çак çимĕçе. Ялти çуртра, 7-8 градус ăшăра, помидора çу уйăхĕччененех упраççĕ вĕсем. Муркашри çурт тавра та хитре пахча çавăрнă. Кунта та темĕн тĕрлĕ улмаçырла йывăççи, пахчаçимĕç ўсет, вун-вун тĕрлĕ чечек хĕмленет. Валериан Семенович пуринчен ытларах кинĕсем лартнă шурă лилисене килĕштерет. Пахчари улмуççисем турачĕсене йăтса ларайманнипе хуçăлма тытăннă.

– Кин йывăççене тураса улмисене çĕре ўкерет. Ытла та йышлă кăçал панулми, çак йывăрăша епле чăтмалла. Тĕрев пани те пулăшмасть, – симĕс улмасене çĕр çине пĕрерĕн тата-тата пăрахать Римма Алексеевна.

Валериан Семенович темĕн тĕрлĕ çырлапа хăналанă хыççăн урама тухса ăсатсах ячĕ.

– Ав кашти-кашти панулми пирĕн, кĕркунне кĕрпеклĕ улма çиме килĕр, кĕтетпĕр сире, – сывпуллашрĕ тараватлă кил хуçи.

Елена АТАМАНОВА.

ПУЛТАРУЛĂХ

# Чăваш сасси янратăр Шуршăлта!

Шуршăлти «Çутă çăл» фольклор ушкăнĕ йĕркеленнĕренпе икĕ çул çеç иртрĕ, апла пулин те куракана хăйĕн пултарулăхĕпе тыткăнлама ĕлкĕрчĕ вăл. Вырăнти артистсен тĕп тĕллевĕ – чăвашлăха упраса хăварасси тата Шуршăл тăрăхĕнчи йăлайĕркене, манăçа тухнă юрă-кĕвве сцена çине каласси. Кĕске вăхăтрах эпир ку енĕпе нумай ĕç турăмăр. Иртнĕ çул Шуршăлсен вăйă юррисене пухса, «Саккăрла» ташша аса илсе «Чĕппи» композици хатĕрлерĕмĕр. Çавăн пекех хăна-вĕрле юррисене, йăли-йĕркине çĕнĕрен пурнăç парса «Кĕр сăри» хатĕрлерĕмĕр. Иртнĕ кĕркунне ăна Çĕнĕ Шупашкарти «Химик» культура керменĕнче кăтартрăмăр. Хула çыннисен хапăл тусах йышăнчĕç пире.

Кăçал вара пирĕн ушкăн Çăварние халалланă район фестивальне хутшăнчĕ. 17 фольклор ушкăнĕ хушшинче икĕ номинацире 3-мĕш вырăн йышăнса икĕ диплом илтĕмĕр.

Нумаях пулмасть Чăваш наци радиовĕ пире республика шайĕнчи «Иксĕлми çăлкуççсем» радиофестивале хутшăнма чĕнчĕ. Çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче Шуршăлти культура çуртне Шупашкартан хисеплĕ хăнасем килчĕç, Шуршăлсен юррисене çырса илчĕç. Ку, паллах, пирĕншĕн питĕ пысăк чыс. Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче вĕсем наци радиовĕпе янăрарĕç.

Шăрăх тăнăран аслă уйра çумăр чўкĕ иртертĕмĕр. Пăтă пĕçерсе, Çўлти Турра пуç çапса кĕлĕ вуларăмăр. Çакă вырăнлă пулчĕ пек туйăнать. Тепĕр каçхинех Шуршăлта çумăр çуса кайрĕ.

Çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче «Çутă çăл» фольклор ушкăнне Мари Элри Чăваш Утарĕнчи Акатуя хутшăнма йыхравларĕç. Çакăнтах регионсен хушшинче иртекен V фестивале те хутшăнтăмăр. Тулли кăмăлпа таврăнтăмăр унтан. Каярахпа районти Акатуйра та хамăр пултарулăха кăтартрăмăр.

"Çутă çăл" фольклор ушкăнĕн ĕмĕт-тĕллевĕ питĕ пысăк. Шуршăлта чăваш сасси янăратăр тесе малашне те тăрăшăпăр.

А.ПЕТРОВА,
"Çутă çăл" фольклор ушкăнĕн ертўçи.

КУЛЬТУРА

# Çу кунĕ мĕн тĕслĕ?

**Ытармалла мар илемлĕ çу кунĕсенче камăн килте ларас килтĕр? Уй-хире тухсан утмăлтуратпа салтак тўми, чавка пуç тата ытти чăпар чечексем çинчен куçа илме çук. Шел те, хĕлĕпех кĕтнĕ çулла сисĕнмесĕрех иртсе каять. Çавăнпа та сар хĕвеллĕ те илемлĕ кунсенче килте тунсăхласа ларни килĕшўллĕ-и?**

Çуллахи каникул вăхăтĕнче усă сывлăшра кĕнеке вуласси чылай çĕрте йăлана кĕчĕ юлашки вăхăтра. Çак кунсенче Елчĕк районĕнчи Çирĕклĕ Шăхальти библиотека ĕçченĕсем шăпăрлансем валли «Çутçанталăкра вула» акци йĕркеленĕ. Кунта пĕчĕккисене ача-пăча кăларăмĕсем, писательсемпе халапçăсем пирки каласа кăтартнă. Çутçанталăкра ачасем асамлă юмахсемпе, çĕнĕ кĕнекесемпе паллашнă. Акцие хутшăнакан пĕчĕк туссем тупмалли юмахсен тупсăмĕсене шыранă, тĕрлĕ ўсен-тăранпа, вĕсем çинчен хывнă сăвă-юрăпа, çавăн пекех истори вăрттăнлăхĕсемпе паллашнă, шухăшлавра пăхаттирсемпе пĕрле çулçўреве те тухнă. Кĕнекепе туслисен кунĕ вăйăпа вĕçленнĕ.

«Çу кунĕ симĕс кăна мар, кĕнеке тĕслĕ те иккен», – çапла хураланă юлашкинчен Çирĕклĕ Шăхаль ачисем.

Елена ГЛУХОВА.

ПИРĔН ТĂРĂХРА

# Сысна пусма

Наçтук аппа çулĕпе ватлăх енне сулăннă пулсан та кил хушшинчи ĕçсене йĕркипе туса пыратчĕ-ха. Выльăх-чĕрлĕхне те вăй çитнĕ таран тытатчĕ. Юлашки вăхăтра çеç вăй-халĕ чакма пуçларĕ. Çавăнпа та хулари ачисем патне çыру çырма шухăшларĕ. Ара, çĕрулми кăларма вăхăт çитет-çке.

«Юратнă ачамсем, кăçал сире çĕрулми пуçтарса илме чĕнес шухăш пур. Ватă аннӳне килсе пулăшатăр пулĕ тетĕп. Хăвăрах пĕлетĕр – картишĕнче икĕ самаях пысăк сысна, чăх-чĕппи... Кăçал тата вунă хур чĕппи илсе ӳстертĕм. Кунĕпе вĕсемпе тăрмашса ывăнакан пултăм», – çырăвне вĕçлесе почта ещĕкне кайса ячĕ.

Ачисем амăшĕн çырăвне илсен нумай кĕттермерĕç – хуравларĕç.

«Анне, ан çиллен пире. Эпир çĕрулми кăларма пыраймастпăр. Шăп çав вăхăтра канма каятпăр. Майĕпен васкамасăр хăвах кăлар. Тен, пĕччене пĕтерĕн. Сысна пуснă тĕле темле пулсан та вăхăт тупса пырăпăр. Мăнукусене те илсе пыратпăр, вĕсем валли пенси укçине кăштах перекетлесе упра. Тата кĕрĕвӳ килте юхтарнине питĕ кăмăллать».

Çырăва вуласан Наçтук аппа диван çине лаштах ларчĕ те çĕрулмие пĕччен епле кăларса пĕтересси пирки шухăша кайрĕ.

# Сӳтĕн ăшалама

Эпĕ, «ĕçкĕç» ята тивĕçнĕскер, хамăн савăнăçлă пурнăçăм çинчен каласа кăтартам-ха сире. Пĕррехинче ĕçкĕ серепине лексе çур уйăх «ырă» куртăм вĕт.

Пĕр кунхине Сăпани мăшăрăм, эпĕ ӳсĕрришĕн тарăхнăскер, пӳрте асар-писер урмăшса кĕчĕ. Эпĕ, ăна хирĕç тăрас шухăшпа, мĕнпур вăя пухса урайĕнче выртакан вутă пуленккине илсе арăм еннелле вăркăнтартăм. Хĕсметре артиллерист пулнă çав эпĕ – тĕлех лектертĕм. Çак кунран пуçласа вăл киле эрнипех килмерĕ. Эпĕ ăна çакăншăн пушшех тарăхрăм. Манăн хырăм та выçать-çке. Çапла выртнă çĕртех пуçа ырă шухăш пырса кĕчĕ. Ара, пирĕн тĕп сакайĕнче сӳтĕн пур. Майĕпен тăтăм, апата çатмапа газ плити çине лартрăм та хам каллех кĕрсе выртрăм. Кăштахран пырса пăхатăп та – çатма тулли ирĕлчĕк. Ку арăм ĕçĕ пулĕ терĕм. Ăшаланă сӳтĕн çиесси пулмарĕ.

Выртатăп каллех маччаналла сурса. Ак тамаша, Сăпани мачча çинчен çиллессĕн пăхать. Çак кунах вăл мана васкавлă пулăшу чĕнсе больницăна ăсатрĕ. Хăçан ĕçме пикеннине лайăх ас тăватăп: нарăс уйăхĕччĕ. Урăлсан пăхатăп – пуш уйăхĕ. Çапла эпĕ мĕн чухлĕ вăхăта çухатнă! Мачча çинчен пăхакан Сăпани турат куçĕ иккенне кайран ăнлантăм. Сăпани мăшăрăма текех ĕçместĕп тесе тупа турăм.

**Иван ЕРОФЕЕВ.**
Патăрьел районĕ.




ПУКАШ ПУТИШĔСЕМ

# Çăпата пулăшнă

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче пичче-аппа ялти мунчала эртелĕ валли çăка хуппи сӳме Атăл леш енне çӳретчĕ. Эпĕ те вĕсене мана пĕрле илсе кайма тилмĕреттĕм. Пĕррехинче манăн ыйтăва тивĕçтерчĕç хайхисем.

Эртел ертӳçи Петĕр пичче вырăна çитсен уринчи çăпатине салтрĕ, шурă тăли хушшинчен хут тата тимĕр укçа тухса ӳкрĕ.

– Пухăнăр! Ĕçшĕн шалу паратăп! Ведомоçе алă пусăр! – савăнтарчĕ вăл çамрăксене. Халăх укçине усал шухăшлисенчен тăла хушшине пытарнă-мĕн вăл.

Микита пичче те асра. Ĕмĕрĕпех пушăтран чаплă çăпата хуçса сутса пурăнчĕ вăл Сĕмĕл пасарĕнче. Шартлама сивĕре кăмакана сывăрма кĕрсе выртать хайхискер. Сĕрĕмпе наркăмăшланнине пула каялла тухаймасть...

Пытарма хатĕрлесе çăпатине салтать ял халăхĕ. Тĕпĕнче туллиех укçа! Нухрата тĕплĕ тытнă арçын.

# Пĕррехинче, дачăра...

Çĕнĕ Шупашкарсен дачисем – Сĕнреш вăрманĕ çумĕнче вырнаçнă. Нумайăшĕ хупăнса тăрать. Сутас – илекенĕ çук. «Çĕньял – Ускасси» чарăнуран Иван мучи кăна хутлать пĕчĕк пӳрчĕ патне. Вун-вун вĕлле усрать вăл ăшăра хупса. Унтах çĕр те каçать хуçа.

Акă такам шаккакан тупăнчĕ.

«Нивушлĕ шанман карчăкăм такси тытсах çитрĕ-ши?» – вĕлтлетрĕ пуçĕнче. Пĕр хĕл çапла килнĕччĕ...

Пĕчĕк хушăкран пăхать хайхи. Хĕл каçма выртман хăмăр упа – шатун текенни – тăра парать. Пыл шăрши илĕртнĕ ĕнтĕ. Пăшал çук старикĕн, пĕртен-пĕр кантăк – решеткеллĕ. Мĕн тумалла?

Кĕсье хунарĕ чиксе тĕп сакайне сикет. Лешĕ çĕмĕрсе кĕнĕ сасă илтĕнет – вĕллесене уçса апатланма хунă пыл карасне çуллать пулĕ.

Кайран паллă пулать: вăраннă хуртсем утамана сăхма пуçласçĕ. Лешĕ хӳтĕленсе юр çинче çаврăнма пуçлать.

Дача хуçин те инкек: кĕсье хунарне çутсан... çĕленсем вăраннă. Çӳлти сасă лăплансан сиксе тухать Иван мучи. Унăн вунă вĕлline те çĕмĕрсе тĕрĕсленĕ. Çакăн хыççăн кĕмĕл çӳçлĕ арçын кӳршĕ ялсенчи самăр та çамрăк инкесем çинчен те маннă.

**ЛИССАППА Тули.**

ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Террорпа экстремизма хирĕç

Тăвай район прокурорĕ терроризмпа тата экстремизмпа кĕрешекен ведомствăсен хушшинчи ĕç ушкăнĕпе лару ирттернĕ. Çавна май маларах палăртнă мероприятисене еплерех пурнăçланине сӳтсе явнă. Тĕрлĕ тĕрĕслев ирттернĕ май вĕренӳ 2 учрежденийĕнче террорла хăрушсăрлăх çукки палăрнă, вĕсене сирес тĕллĕшпе представлени çырнă.

Çакна та палăртмалла: прокуратура экстремизмпа терроризм идеологине сарассинчен сыхланасси пирки калакан саккуна Интернетра еплерех пăхăннине тăтăшах тĕрĕслет. Хаçат-журнала та куллен тишкерессĕ. Ку тĕлĕшпе районта йĕркене пăсни пулман-ха, анчах çакă профилактикăна хавшатмаллине пĕлтермест. Хĕр-упраçпа яш-кĕрĕме Интернетра, уйрăмах социаллă сетьсенче, саралакан тĕрлĕ информаци витĕм кӳме те пултарать-çке.

Экстремизпа террор шухăшне сарнишĕн административлă тата уголовлă майпа айăплассĕ.

Сăмахран, 2016 çулхи çу уйăхĕнче Çĕнĕ Шупашкар çыннине пĕр пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăннă. «ВКонтакте» социаллă сетьре вăл нацист символики ӳкернĕ футболка тăхăннă каччăпа хĕр сăнне вырнаçтарнă.

Канаш район çыннине вара кураймалăх çуратнăшăн айăпланă. Çамрăк социаллă сетьсенчен пĕринче Раççейри пĕр нацие выльăхпа танлаштарнă.

Ларура ĕç ушкăнĕ халăх пухăнакан вырăнсенче террорла ĕçрен сыхланса тĕрĕслевсем ирттерме, экстремизма хирĕç саккуна еплерех пăхăннине тишкерме палăртнă. Çак ĕçсемшĕн явапписене палăртнă.

**Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай район прокурорĕ.**

ЫЙТУ-ХУРАВ

# Ĕçе çăмăл-латассĕ

**Ача кĕтекен тата çултан çура тултарман ача пур хĕрарăмсене урăх ĕçе мĕнле тĕслĕхсенче куçараççĕ?**

**ГАЛИНА И.**

РФ Ĕç кодексĕн 254-мĕш статйипе килĕшӳллĕн, ача кĕтекен хĕрарăмсен тĕлĕшпе, медицина справки пуррине тата ыйтса çырнине шута илсе, тухăç нормине чакараççĕ е производствăн япăх витĕмĕнчен хăтарса урăх ĕçе куçараççĕ. Шалу малтанхи вăтам шайрах юлмалла.

Производство хăрушсăрлăхне тивĕçтерекен урăх вырăн тупса париччен ăна ĕçрен хăтармалла, шалăвне катмалла мар. Медицина учрежденийĕнче диспансеризаци тĕрĕслевне тухнă чухне те вăтам шалу сыхланать.

1,5 çул тултарман ачаллă хĕрарăм малтанхи ĕçне пурнăçлаймасть тăк ыйтса çырнине тивĕçтерсе ăна урăх ĕçе куçараççĕ, шалу ача çулталлăк çура тултариччен малтанхи вăтам кăтарту шайĕнчех юлмалла.

**Н.ГРУДЦЫНА,**
**Шупашкарти Калинин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи.**

ХУРА ХЫПАРСЕМ

# Хĕрачана пусмăрланă

**Муркаш районĕнче пурăнакан 36 çулти арçын тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçарнă. Ăна çул çитмен хĕрачана пусмăрланăшăн айăплассĕ.**

Республикăри следстви управленийĕн Етĕрнери районсен хушшинчи следстви уйрăмĕ Муркаш район çынни тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе пĕтернĕ. Следстви версийĕ тăрăх, кăçалхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче 12 çулти хĕр кӳршĕ ялтан шкултан килне таврăннă. Айăпланакан йĕри-тавра çын çуккипе, хĕрача вăйсăррипе усă курса ăна пусмăрланă.

Тĕрĕслĕхе палăртма судпа медицина темиçе тĕрлĕ экспертизи ирттернĕ. Хĕрачапа тӳрех психологипе реабилитаци ĕçĕсем ирттернĕ.

Судпа психиатри экспертизи арçын преступлени тунă чухне те, халĕ те хăй мĕн тунине, обществăшăн хăрушлăх кăларса тăратнине ăнланманнине палăртнă. Ăна специализациленнĕ психиатри стационарĕнче ирĕксĕрлесе сиплеме сĕннĕ.

Материалсем пухса çитернĕрен уголовлă ĕçе пăхса тухма Муркаш район судне ярса панă.

**Татьяна НАУМОВА.**

# Ырă мар шăрша туйсан

**Шупашкарта наркотикăн пысăк виçине салатма пултарнă çамрăк çынна тытса чарнă.**

ЧР ШĔМĕн уголовлă шыравĕн управленийĕн наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе кĕрешекен уйрăмĕн ĕçченĕсем 23 çулти йĕкĕт килĕнче 1 килограмм яхăн синтетика наркăмăшĕ тупнă. Оперативниксем çамрăк республикăра наркотик салатас ĕçе явăçма пултарнине палăртаççĕ. Çавна май шыравпа следстви ĕçĕсем ирттереççĕ.

ШĔМ ĕçченĕсем çынсене асăрханулла пулма хистеççĕ. Нумай хваттерлĕ çуртсен подъездĕнчи ырă мар шăрша асăрхасан – пушшех те. Притон вырнаçнă вырăнта химии шăрши кĕрет. Вăл ацетона е уксуса, бензина е йода аса илтерет. Эсир пурăнакан вырăнта халиччен асăрхаман çамрăксем тăтăшах улшăнса тăрсан та сисчĕвленмелле.

Кун пек лару-тăрăва асăрхасан ШĔМĕн «шанăç телефонĕпе» 8-800-100-84-02 е 02-пе шăнкăравламалла.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



## Çырла рулечĕ

**Чуста çăрма 1 банка çăратнă сĕт, 1 стакан çăнăх, 3 çăмарта, 100 грамм услам çу, 1/3 чей кашăкĕ апат соди, тип çу кирлĕ.**

**Ăшне хума 1 стакан çырла, 1 стакан сахăр, çиеле сĕрме 1 стакан сахăр, 2 апат кашăкĕ çăнăх, 3 апат кашăкĕ какао, 1/5 чей кашăкĕ тăвар, 150 миллилитр сĕт, 2 апат кашăкĕ тип çу, 1 чей кашăкĕ ванилин хатĕрлемелле.**

Çăратнă сĕте услам çупа, çăнăхпа, апат содипе пăтратмалла. Чустана тип çу сĕрнĕ çатмана ямалла, духовкăра 20 минут пĕçермелле.

Çырлана сахăрпа пăтратмалла. Вĕри коржа çак хутăша сĕрмелле, рулет майлă çавăрмалла.

Çиеле сĕрмелли çимĕçсене пăтратмалла, çăраличчен пĕçермелле. Юлашкинчен ванилин хушмалла. Çак хутăшпа рулета витмелле.

## Çăмăл апат

**6 çăмарта, пылак 1 пăрăç, 300 грамм шампиньон, 1 пуç сухан, тăвар, вĕтетнĕ хура пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Шампиньонпа сухана вĕтетсе тип çура ăшаламалла. Пăрăça тасатса тăваткаллаца турамалла та çатмана ямалла. 3 çăмартана тăварпа тата пăрăçпа лăкамалла, çимĕçсене хутăштарса лайăх пăтратмалла та çулăма чармалла. Хутăша пĕчĕк 3 формăна тултармалла. Варрине путăк туса унта чĕрĕ çăмарта шаккамалла. Апата 15-20 минутлăха духовкăна лартмалла.

## Бананпа сĕтрен

**4 банан, 2 стакан сĕт, 1 апат кашăкĕ сахăр, 8 чей кашăкĕ çăратнă сĕт кирлĕ.**

Банана тасатса сĕхен турамалла, вĕретсе сивĕтнĕ сĕтпе, сахăрпа, çăратнă сĕтпе пăтратмалла. Коктейле тĕрех ĕçмелле.

## Айс-крим

**3 апат кашăкĕ улма-çырла мороженăйĕ, 1 апат кашăкĕ хăмла çырли сиропĕ, тĕрлĕ улма-çырла, çур стакан газлă шыв кирлĕ.**

Мороженăя, хăмла çырли сиропне креманкăна тултармалла, улма-çырлапа илемлетмелле. Пăтратмасăрах газлă шыв хушмалла. Тĕрех çимелле.

## Улма-çырла шерпечĕ

**2 лимон, 2 апельсин, 1 литр шыв, 1 стакан чей, çур стакан сахăр, чĕрĕ çырла, чие çулçи, пĕтнĕкĕн 2-3 турачĕ кирлĕ.**

Лимонпа апельсин хуппине турамалла, вĕрекен шыва ярса лартмалла. Унтах чей хушмалла, 3-4 сехетрен сăрăхтармалла, сахăр ямалла, ирĕличчен пăтратмалла. Лимонпа апельсин сĕткенĕ хушмалла. Шерпете пăр катăкĕпе, çырлапа, пĕтнĕк çулçипе илемлетсе сĕтел çине лартмалла.

## Лимон квасĕ

**3-4 лимон, 2,5 стакан сахăр е пыл, 5 литр шыв, 15-20 грамм çĕпре, исĕм çырли кирлĕ.**

Вĕретнĕ шыва лимон сĕткенĕ хушмалла. 1 стакан сахăра ылтăн тĕс çапиччен çатмара ăшаламалла. Ăна лимонпа шыв хутăшне ямалла. Шĕвеке 25-30 градус таран сивĕтмелле. Унтан çĕпрепе, юлашки сахăрпа е пылпа пăтратмалла. Лимон квасне темиçе сехет ăшă вырăнта тытмалла. Сулхăн çĕре куçарсан исĕм хушмалла. 1-2 кунран ĕçме юрăхлă.

## Скумбри

**700 грамм скумбри, 200 грамм сыр, пылак 2 пăрăç, 2 помидор, çур стакан тип çу, 2 апат кашăкĕ вĕтетнĕ сухари, петрушка, пĕр пуç сухан, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Тасатнă пулла тăварпа тата пăрăçпа сăтăрмалла, сухарире йăваламалла. Татăксене тип çу сĕрнĕ çатмана вырнаçтармалла. Вĕсем çине çаврашкан каснă сухан, пăрăç, помидор хумалла. Çатмана кăштах шыв ямалла та пулла духовкăра пĕçермелле. Пиçсен апата улăм пĕрчи евĕр туранă сыр, вĕтетнĕ петрушка сапмалла.

## Миндаль печенийĕ

**Çуршар стакан çăнăх, сахăр, миндаль, 5 апат кашăкĕ шăратнă çу, 2 çăмарта, 1 лимон хуппи, 1/4 апат кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

Шăратнă çăва сахăрпа, çăмартапа, лимон цедрипе пăтратса кăпăклантармалла. Çăнăхпа апат соди хушса чуста çăрмалла. 1 сантиметр хулăнăш йĕтĕрлемелле, тĕрлĕ формăллă печени касса кăлармалла. Çиеле вĕтетнĕ миндаль сапмалла. Печение духовкăра пĕçермелле.

СЫВЛĂХ

## Салтак тӳми

Хăш-пĕр курăк пĕр чире çеç сиплемест, пĕтĕм организма паха витĕм кӳрет. Салтак тӳми – шăпах çавнашкаллисенчен пĕри.

## Тутлă чей

Паян салтак тӳми чейне аптекăра та, лавккара та туянма май пур. Вăл вар-хырăм, ват хăмпи ĕçлессине лайăхлатать. Шăл ыратсан, уйăх хушши йывăр килсен, амалăхран юн юхсан пулăшать. Сывăрма выртас умĕн пылпа ĕçсен канлĕ те тутлă ыйха путма май парать.

## Симĕс аптека

Пепкесене шыва кĕртнĕ чухне те салтак тӳми хушма сĕнеççĕ. Кун пек ванна канлĕ сывăрма пулăшать. Хырăмĕ ыратнипе асаплансан та пĕчĕкскерсене 1-2 чей кашăкĕ чечек шывне /1 чей кашăкĕ чечеке 1 стакан вĕри шыва ямалла/ ĕçтереççĕ.

Пыр шыçсан, шăл туни ыратсан та салтак тӳми пулăшать /1 апат кашăкĕ чечеке 1 стакан вĕри шыва ямалла/. Çак шывпах сурана, писнĕ вырăна çума юрать. Вар-хырăм ыратсан та шыв паха витĕм çеç кӳрет.

## Маска

Пит типсен, ӳчĕ пĕркеленсен 2 апат кашăкĕ чечеке 200 миллилитр вĕри шыва ярса 10-15 минут лартмалла. Унпа мамăка йĕпетсе 20-30 минутлăха пит çине хумалла. Çиелтен сăмса тутрипе витсен юрать. Мамăка илсен пите çуллă крем сĕрмелле, 15 минутран сăтăрса тасатмалла.

## Çӳçшĕн

Салтак тӳми шывĕпе пуçа çăваççĕ. Çакă çӳçе çирĕплетме, ӳсме пулăшать, лĕкĕрен тасатать. Ку тĕллевпе 4 апат кашăкĕ курăка 1,5 литр шыва ярса 5 минут вĕретмелле. Çак шĕвекпе чӳхесен çӳç çемçелет.

Салтак тӳми шывĕ çӳçе те çутатать. Кĕмĕл пĕрчĕсене те сăрлать вăл. Кун пек усă курас тесен чечеке вĕри шыв /1:3/ хушса термосра 3-4 сехет лартмалла. Çӳçе шывпа йĕпетсе алшăллипе чĕркемелле те 40-60 минут тытмалла.

## Чечеке пуçтарса типĕтесси

Салтак тӳми чечекне çеçке çурсанах пуçтараççĕ. Унсăрăн вăл вăррине тăкать. Чечеке уяр çанталăкра татмалла. Йĕпере е сывлăм типмесĕр пуçтарсан вăл хуралать. Чечеке типĕ вырăнта сӳхен сарса хумалла.

Салтак тӳмипе висерен ытла усă курсан ӳслĕк аптратма, пуç ыратма пултарать, вăй чакать. Çавăнпах психика тĕлĕшĕнчен аптăракансен, ача кĕтекенсен уйрăмах асăрханулă пулмалла.

*Халăх мелĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашламалла.*

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Утă уйăхĕнчи ĕçсем



Купăста пусĕ чăмăртанма пуçласан пĕр витре шыва 40 тумлам йод хушса шăварни усăллă. Кашни тĕме – пĕрер литр. Çавăн пекех пылак шыв та пăсмасть. Витрере çур стакан сахăр ирĕлтермелле. Пусĕ чăмăртаннă тапхăрта çапла 3-4 хутчен апатлантарсан купăста çав тери тутлă пулать. Купăста тăшманĕсенчен пĕри – лăймака хурт. Вăл вĕрие чăтма пултараймасть, 40 градусрах вилет. Çакна шута илсе касхине, сăтăрçă «сунарта чухне», купăстана вĕри шывпа /60 градуса яхăн/ шăвармалла. Вĕри шыв лексенех хурт вилет, пахчаçимĕç вара сиенленмест.

Утă уйăхĕн вĕçнелле пăрăç та писме тытăнать, ăна секаторпа е çивĕч çĕçĕпе касса илмелле. Вăрлăх валли уйăрнисем йăран çинчех юлчăр. Çимĕç ӳснĕ вăхăтра пăрăça тăтăшах шăвармалла.

Кăшман çулçи хĕрелни тăпрара натри тăварĕ çитменнине пĕлтерет. Ун пек чухне ăна 10 литр шывра 1 стакан тăвар ирĕлтерсе шăвармалла.

Тăрăхла кавăнпа патиссона эрнере иккĕрен кая мар татсах тăмалла. Ытлашши ӳссе кайнисем çĕннисене чăмăртанма чăрмантараççĕ. Çак вăхăтра пахчаçимĕçе кĕлпе апатлантармалла /3-4 тĕмме – 1 стакан/. Ун хыççăнах кали им-çамĕллĕ /10 литр пуçне 40 грамм/ шĕвекпе шăвармалла. Тăрăхла кавăн шыв юратни пирки ан манăр.

Брокколипе тĕслĕ купăстана эрнере 1-2 хутчен шăвармалла кăна мар, апатлантармалла та.

Кая юлса пулакан купăстана купаласах тăмалла. Çак ĕçе çумăр хыççăн е шăварнă хыççăн тытăнмалла. Унччен суперфосфат тата кали им-çамĕпе /10 литр шыва 10 грамм/ апатлантарни те пăсмĕ.

СĂНАНИНЧЕН

# Çĕр çырлипе хăмла çырли

●Çĕр çырлипе хăмла çырли нумай тăк – тепĕр çул ыраш лайăх пулать.

●Хăмла çырли шултра та çаврака – çитес çул ыраш тулли пучахлă пулать.

●Хăмла çырли малтанхи лайăх пулсан – ыраш малтан акни лайăх тухать, кайранхи лайăх тăк – кайранхи.

●Хăмла çырли малтан тăрринчен пиçсен çулла тулă лайăх пулать, аялтан пиçсен – начар.

# Армути

●Ыраш акнă вăхăтра армути йӳçĕ пулсан – ыраш аван тухăçне.

●Çурла уйăхĕнче армути тымарĕ шултăран салансан – çитес çул тыр-пул лайăх пуласса.

●Кĕрхи тырра армути вĕтĕ тымарĕ аталанма пуçласан акма юрать теççĕ.

●Кĕркунне ыраш ани çине вĕтĕ армути нумай тухсан çур аки çăмăл пулать.

ШУТА ИЛМЕ

# Чие

Мĕнпур çырла организма кирлĕ витаминпа, микроэлементпа пуян. Калăпăр, чиере инозит пур. Вăл организмри кашни клетка пурнăçне, япаласен ылмашăвне йĕркелесе тăрать. Унсăр пуçне чĕрепе юн тымарĕсене çирĕплетет, лăплантарать, шыçă чирĕсене хирĕç кĕрешме, юн çывăрассине чакарма пулăшать. Анемирен те аван пулăшать вăл, мĕншĕн тесен унра тимĕр чылай. Антиоксидантсен виçи нумайăн вара ватăласран хӳтĕлет. Çырлари пектинсем организмри сиенлĕ япаласене кăларма пулăшаççĕ, çавăнпа та чиене ытларах çимелле.

Шăнса пăсăлнинчен те усăллă вăл. Çырла сĕткенĕ е компочĕ температурăна чакарма, чир малалла аталанассине пӳлме пулăшĕ. Сĕтпе хутăштарнă чие сĕткенĕ вара тăвар çаврăнăшне йĕркене кĕртĕ, сыпăсем ыратнипе аптăракансемшĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ку.

* * *

●Ешĕл çимĕçе типĕтме пĕлмелле. Унсăрăн çулçи сарăхать, витамин сыхланса юлмасть. Шăрăх та типĕ кун петрушкăна шурă хут çине сармалла, марльăпа витсе хĕвел çине хумалла, 2 кун тытмалла. Çулла типĕтсе ĕлкĕреймесен хура кĕркунне сыхă туса маччаран çакма кирлĕ мар. Татсанах 45-50 градус таран хĕртнĕ духовкăна хумалла.

●Компот вĕретнĕ чухне витамин ытларах сыхланса юлтăр тесен çырлана вĕрекен шыва чăмтариччен малтан унта кăшт çеç лимон йӳçекĕ хушмалла.

●Иргапа чиене кайăксем тапăнасран йывăça сеткăпа е кантрапа çавăрса сыхмалла. Кăшт çил вĕрнипех чăштăртатса сасă кăларакан йăлтăркка хăю, фольга татăкĕсем çакмалла.



●Çамрăк çĕрулми тути пур чухне те тивĕçтермест. Пĕçернĕ чухне кастрюле кăштах укроп тата 2-3 шăл ыхра хушсан вăл çав тери техĕмлĕ пулĕ.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ



# Пăрçа яшки йăлăхтармасть-ши?

Ирхине апат анманнипе кофе ĕçнипех çырлахатăп. Ĕçе çитсен алă тӳрех чей курки патне туртăнать. Кăнтăрлахи апат хăçан мĕнле иртет. Йăлтах ĕçе путнăран хăш чухне ун пирки мансах каятпăр. Кафе-столовăя тухса çӳреме укçине мар, вăхăта шел мана. Хуçа çирĕп ыйтма юрататъ-çке, хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçламасан сĕтел шаккаса вăрçасси те часах. Çук, сасă хăпартмасть вăл, ку тарана çитсе кăшкăрнине нихăçан та илтмен, çĕр тĕпне анса каймалли ик-виç сăмах çеç калать лăпкăн. Хăв ятна манса кайса çанă тавăрса ĕçлемеллине пĕлтерет ку. Хуçа çук чухне вĕренрен ытла та хăвăрт вĕçерĕнсе каятпăр çав. Нумай пулмасть пĕр эрнелĕхе Хура тинĕс хĕррине кайрĕ вăл. Эпир те çав тапхăрта ыр куртăмăр ĕçре. Никам сисиччен шыва кĕме те кайса килтĕмĕр пĕр шăрăх кун. Хамăр çывăхра кĕрсе тухман лавкка та юлмарĕ. Эпĕ хитре кĕпе туянтăм, атă-пушмак юратакан Надя кĕркунне валли каллех çĕнни илсе хучĕ. Упăшки мăкăртатасран хăраса ĕç пӳлĕмĕнче тытать вăл вĕсене. Кăнтăрлахи вăхăтра кафере апатланма тытăнтăмăр. Ĕçтешĕмĕр Коля çеç пирĕнпе пĕрле тухса çӳремерĕ. Ăна арăмĕ кашнинчех пĕр термос пăрçа яшки тултарса парса ярать. Ялан пĕр апат епле йăлăхтармасть-ши ăна? «Халь мĕнпур çĕрте кризис хуçаланать, перекетлĕ пурăнмалла, пĕрмай хырăм пирки шухăшламалла мар», – тепĕр чухне хыттăн каласа хурать пире. Ялта агрономра ĕçлекен пиччĕшĕ кĕркунне пĕр михĕ пăрçа кӳрсе панă-мĕн. Пĕррехинче ӳкĕте кĕртрĕмĕрех ăна, уçăлмалла хамăрпа пĕрле кафене çавăтса кайрăмăр. Черетре чиперех тăракан арçын тахăш вăхăтра пире пĕр сăмах шарламасăрах çухалчĕ. «Алă çума кайрĕ пулĕ, часах килет», – енчен енне пăхкаларĕ Надя.

Эпир çитнĕ çĕре пӳлĕмре каллех пăрçа яшкин техĕмлĕ шăрши сарăлнăччĕ. «Каçарăр та, хĕрсем, 300 тенкĕ укçа парса апат çиместĕпех сирĕнпе. Мана текех хăвăрпа пĕрле ан та чĕнĕр, çавах пымастăп. Шухăшласа пăхрăм та – пĕрре апат çиес укçапа 6 килограмм макарон туянма пулать. Темиçе уйăха çитет вăл пире. Çитменнине михĕ тĕпĕнче пăрçа та юлнă-ха», – куçне-пуçне çавăрса хучĕ ĕçтеш. «Юрать, юрать, сана хистеместпĕр-çке эпир, килти апат, юратнă арăм пĕçерни, тата тутлăрах», – лăплантартăмăр Кольăна. «Кур-ха эсĕ ăна, хаклă макарон туянатьха вăл, 50 тенкĕлĕххине», – пӳлĕмре хамăр çеç юлсан ихĕлтетрĕ Надя.

Аякран пирĕн тăрăха лекнĕ ĕçтешĕм чăваш арçынĕсенчен ниепле те тĕлĕнме пăрахаймасть. «Мĕншĕн ытла та хыткукар-ха вĕсем. Коля та – тĕлĕнтермĕш. Хут уйăрттармасăр пурăнакан упăшкам та çавах, бензин валли укçа памасан машинăпа ниçта та илсе каяс çук. Лавкка умĕнче чарăнать те: «Эпĕ кĕтсе ларатăп, хăв çеç кĕрсе тух-ха. Ман валли хăйма туянма ан ман», – йăл кулать чеен. Ухмах вырăннех хурать мар-и, темиçе çул хушшинче пĕлсе çитнĕ вăл ман кăмăла, лавккана пурпĕрех кĕретĕп, киле валли мĕн кирлине çавах туянатăп. Ку тарана çитсе кафене илсе кайса курман вăл мана, унти апата килĕштермест имĕш. Чечек тавраш туянма пĕлмест-мĕн», – кăмăлсăррăн калаçать Оля.

Пăрçа яшки юратакан Коля халь ешĕл çимĕç сапнă макаронпа хăяр çиет. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче пӳлĕмре тутлă-ă-ă шăршă сарăлать. Кăмăлĕ уçă пирки унăн пурнăçĕ, çемйи пирки йăлтах пĕлсе тăратпăр. Пиччĕшĕ кӳрсе панă хайхи пăрçи пĕтнĕ тет, макаронне пасартан курттăммăн, 30 тенкĕпе, туяннă. Хунямăшĕн пахчинче хăяр та аван çитĕннĕ кăçал. «Хĕл хырăмĕ аслă, лаша çунине те çулла хатĕрлемелле, кану кунĕсенче 15 банка хупрăмăр ĕнтĕ», – ват çынла калаçма юрататъ Коля. «Хĕлле хăяр çитерĕн-и?» – сăмах чĕнмесĕр чăтаймасть йĕплеме юратакан Надя. «Кам чарать сире, хăвăр тăварлăр. Ман çемье ахаль те пысăк, кăçал хуняма та хĕл каçма килесшĕн-ха», – сăмси айĕнче мăкăртататъ шӳте ăнланман Коля.

Хуçа Хура тинĕс хĕрринчен таврăнчĕ. Халь пирĕн те кафе-столовăй тăрăх çӳреме вăхăт çук. Пăрçа пекех хытă Коля пĕччен çинине пăхса ларма аван мар. Ирĕксĕрех пасара кайса хамăрăн та макарон курттăммăн туянмалла пулĕ. 30 тенкĕлĕххине, шăп Кольăнни пеккине.

**СВЕТЛАНА.**
Шупашкар хули.

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Епле пурăнатăн, Ванюкăм?

«Ку кинемей ухмаха тухнă пуль» тетĕр-ха та ĕнтĕ. Çапах та алла хутпа калем тытрăмах. Хĕрсемпе йĕкĕтсем чун пăшăрханăвне пайланине, арăмĕсем упăшкисем айккине чупнине чăтса пурăннине, ĕçлемесĕр ĕçсе выртнине çырнисене вуланă хыççăн манăн та чунăма уçас килчĕ.

Утмăл урлă каçрăм, çитмĕле çывхаратăп. Чунăм вара халĕ те çамрăк-ха – паян та тунсăхлатăп. Çамрăк чухнехи тусăма халĕ те куç умĕнче усратăп.

Вăтам шкул пĕтерсен вырăх тухтăрне вĕренме кĕтĕм. Ун чухне эпир пурте яла таврăнса тăван тăрăхра тĕпленме ăнтăлнă вĕт. Çавăнпах колхозра кирлĕ специалист пулас терĕм.

Эпĕ халĕ те уçă кăмăллă. Автобусра пынă чухне юнашар арçын-и, хĕрарăм-и, ача-и – сăмах пуçаратăп. Ун чухне те вăтанса тăман. Ыттисем калаçнине айккинче итлемен, пĕрле кулнă-ахăлтатнă. Пĕр ĕçрен те, пĕр уявран та пăрăнман.

Комсомол организацийĕ йĕркеленĕ уявра Ванюкпа паллашрăмăр. Тĕрĕсрех, пĕр-пĕрне пуçласа куртăмăр. Вăл та мана куç хӳрипе сăнанине туйрăм. Иккĕмĕш хутчен кăвак куçлă сарă каччăна хамăр техникум умĕнче асăрхарăм. Пирĕн куççем тĕл пулчĕç ун чухне. Хĕрелсе вăтантăм. Ытти чухне шăпăл-шапăл тăванскер халĕ çăвара шыв сыпнă пек иртрĕм.

Кайран эпир унпа паллашрăмăр, туслă та çӳрерĕмĕр. Унпа чухне хама мĕн тери телейлĕ туяттăм эпĕ! Ăна кăшт çеç курни те мĕн тери савăнăçчĕ. Курнăçмасан тунсăхлаттăм. Паллах, çакна ыттисене каламан. Анчах тантăшсем хĕр тунсăхне сисетчĕçех.

Атăл хĕрне уçăлма тухсан алăран çавăтатчĕ те вĕçсе кайманни кăначчĕ. Вăрттăн вырăна çитсен çын куçĕнчен асăрханса çупăрлатчĕ те... ытамĕнчен тухма хал çитерейместĕм. Епле ирĕлместĕм-ши тулькăш? Телейĕм татăлми туйăнатчĕ. Чăн та, çав самантсенче пĕр-пĕринчен уйрăлса каясса пачах та чухламан.

Çын умĕнче хăйне сăпайлă тытма пĕлетчĕ Ванюк. Анчах ăшĕнче ясарлăх выляни палăратчех. Иккĕн çеç юлсан еплерех ыталатчĕ! Мĕн тери ачашчĕ вăл... Пĕр-пĕр сак çине вырнаçсан ытамне илетчĕ те малашне еплерех пурăнасса палăртаттăмăр. Шухăшпа ăçта кăна çитместĕмĕр пуль! Ĕмĕтсем çунатлăччĕ.

Мана качча илесси çинчен те тăтăш калатчĕ. Аттепе анне патне хăнана пĕрле каясси пирки те сăмахлатчĕ. Питех те шанчăклă çынччĕ вăл. Çавăнпах ăна ĕненетĕм те. Пĕр каçхине хăйне тытса чараймарĕ тусăм. Пит çăмартинчен чăпăрт! кăна чуптурĕ, унтан çупăрласа тытрĕ те хăлхаран текех чăтса пурăнайманнине, мана чунран юратнине пăшăлтатма пикенчĕ. Темле те чарма хăтлантăм ăна, анчах пултараймарăм. Темле те ӳкĕтлерем – усси пулмарĕ. Вăйлă алла епле тытса чарăн-ха? Кăшкăрма та аптăрарăм. Çынран иментĕм. Ванюк та хăлхаран пĕр вĕçĕм мана пăрахмасса, ку каç хыççăн тата ытларах хисеплеме пуçласса çине-çине пăшăлтатрĕ... Çапла пĕр каçра хĕртен арăм пулса тăтăм.

Намăса ниçта хума пĕлеймерĕм. Тусăмсем те çылăха мана курсанах ăнланассăн туйăнчĕ. Ванюк хама ним пулман пек тыткалама хушнине асра тытса çеç яланхиллех савăк çӳреме тăрăшрăм. Савни те хăйне ытти чухнехиллех тытрĕ – «юрататăп» тесе пăшăлтатма чарăнмарĕ.

Анчах... часах манăн савни авланчĕ. Чĕрем епле чăтрĕ-ши? Вăл урăххине хур тунă сас-хура çамрăксен хушшинче часах сарăлчĕ. Ман пирки çеç нимĕн те ан пĕлччĕр тесе мĕн чухлĕ кулянман-ши? Пирĕн вăхăтра хĕр чысне çухатни мĕн тери намăс пулнă-çке!

Ванюк туй кĕрлеттернĕ чухне диплом илесси икĕ уйăх çеç юлнăччĕ. Анчах вăхăт çав тери майĕпен шурĕ. Вĕренсе пĕтермесĕр яла тухса кайма юрамасть. Тарас килсен те. Эпĕ еплерех çуннине, асапланнине пачах туймарĕç кунпа çĕр – пĕр-пĕрне улăштарма пачах васкамарĕç. Мĕнле чăтрăм-ши çакна? Халĕ те тĕлĕнетĕп. Ун чухне Ванюка курайми пулса çитнĕччĕ. Чи пĕрремĕш тăшманччĕ вăл маншăн.

Кунсем çеç мар, çулсем иртрĕç унтанпа. Эпĕ вара Ванюка халĕ те куç умне кăларатăп. Епле-ха тетĕр пуль? Вăхăт иртнĕ май япăххи тĕтре пек сирĕлет. Ванюк мана улталаса кӳрентернине те каçарма пултартăм. Чăн-чăн туйăм тасалăхĕ-ши çакă?

Паян тесен паян курса калаçăттăм унпа. «Мĕнле пурăнатăн, тусăм?» – тесе ыйтăттăм. Чун каниччен калаçăттăм. Унсăрăн епле пурăннине каласа кătартăттăм.

«Чăваш хĕрарăмне» вулатăн пулсан – салам сана, тусăм! Ас тăватăн-и мана? Эпĕ вара манман...

**ВЕРА.**

АХ, АНЧАХ

# Ют арçын ăшши

Арăмĕпе уйрăлнă хыççăн Витали пĕччен нумай пурăнмарĕ. Хуларан тивĕçлĕ канури хĕрарăма тупса килчĕ. Малтанах ĕне те, хур-кăвакал та тытрĕç иккĕшĕ. Пахчара кăна мар, хирте те йăран турĕç. Пахчаçимĕç, выльăх-чĕрлĕх сутса тупăш илчĕç. Виталин пурнăçĕ майлашăннăнах туйăннăччĕ.

Пĕррехинче пĕр çăвартан пурăнакан мăшăра юнашар яла хăнана чĕнчĕç. Витали урараn ӳкичченех эрех ĕçекен марччĕ. Ку хутĕнче тем пулчĕ ăна – вырăн çине кайса выртнине те ас тумасть. Ир енне вăрансан Лидăна шырама пуçларĕ хайхискер, анчах хĕрарăм сас памарĕ. «Киле кайнă ĕнтĕ вăл», – хăйпе хăй калаçрĕ арçын. Тул çутăличчен лăпкăнах çывăрчĕ.

Сĕтел хушшине лартмасăр Виталие кăларса ямарĕç кил хуçисем. Арăмĕсĕр хăйне ирĕклĕрех тытрĕ вăл. Хĕрарăмсене ыталарĕ те, чуптурĕ те. Ташласа та, юрласа та пăхрĕ.

Кăнтăрла енне тин киле çитрĕ арçын. Ак тамаша, арăмĕ килмен, выльăх-чĕрлĕхĕ витере макăрса тăрать. Тарăхрĕ Витали, çапах килти ĕçсене вĕçлемесĕр урама тухмарĕ. Арăмĕ халь-халь хапха уçса кĕрессĕн туйăнчĕ ăна, анчах Лида темшĕн таврăнма васкамарĕ.

Ăш-чикĕ çунса тухасла ыратма пуçларĕ унăн. Малтанхи арăмĕ ют арçынпа явăçсан та хальхи пекех япăхчĕ ăна. Нумай та вăхăт иртмерĕ – чипер Урине Виталие пăрахса кайрĕ. Эх, кĕвĕçӳ мĕнешкел чĕрмелерĕ унăн чунне.

Лидăна хусахăн килĕнче шыраса тупрĕ Витали. Мĕн тума кĕнĕ вăл унта? Упăшкине курсанах хĕрарăм пахча хыçĕпе тухса тарчĕ. Арçын та ун хыççăн кайрĕ, çапах темле чупсан та хăваласа çитеймерĕ.

Витали арăмĕпе вăрçăнса мар, лăпкă калаçса пăхма палăртрĕ. Анчах Лида итлесшĕн те пулмарĕ ăна. «Арçын ăшшипе киленес килет. Санран çамрăкраххисем вырăн çинче те хĕрӳрех», – çапла калама чĕлхи мĕнле çаврăнчĕ-ши Лидăн? Нумай шухăшласа тăмарĕ хула майри – япалисемпех хайхи çав хусах патне куçрĕ. Çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ уншăн.

Арăмне каçарма та хатĕрччĕ Витали. Лида вара упăшки çинчен аса та илмерĕ. Ялти хусахсемпе пĕр вĕçĕм ĕçме пуçларĕ. Паян – пĕри, ыран тепри килĕшрĕ ăна. Лидăна та нихăшĕ те тиркемерĕ.

Ял-йыш ясар хĕрарăма сӳтсе яврĕ, ăса вĕрентме хăтланчĕ. «Хăть те мĕн калаçчăр – мана пурпĕрех», – аллине сулчĕ хула майри.

Амăшĕ хытах чирлесен хулана куçма лекрĕ Лидăн. Сарлака хул-çурăмлă пĕр хусаха хăйĕнчен хăвармарĕ вăл. Пенси укçипе ăна лайăх пăхать хĕрарăм. Лешĕн ĕçе вырнаçас шухăш та çук пулмалла. Апат çиет те диван сыхлать вăй питти арçын. Лида кăшт пушансанах йăпăр-япăр ун çумне кĕрсе выртать.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**



*Владимир КУЗЬМИН*

# Телей хыççăн чупса

**(Малалли. Пуçламăшĕ 24-26-мĕш номерсенче).**

Лина хуларан кĕрлеттерсе çитес кун район центрĕнче шăпах парторганизаци секретарĕсен çураки умĕнхи семинарĕ пуçланнăччĕ те, Крутова станци тухма меллĕ пулчĕ. Малтан вăл Линăна чăтма çук хытă тарăхнăччĕ, ăна ĕмĕрлĕхех манма та шутланăччĕ. Çук, манаймарĕ. Акă вăл семинартан вокзала васкарĕ. Перрон çинче хăйĕнчен хăй хăраса тăчĕ, чĕри, вакун урапи кăртлатнă пек, кăртлатса тапрĕ. Уткаласа та, шăхăркаласа та пăхрĕ Максăм, анчах чĕре таппи улшăнмарĕ унăн. Юлашкинчен пуйăс килсе çитрĕ. Вакун картлашкинчен сиксе аннă Линăна Максăм катаранах курчĕ, ун патнелле чупрĕ. Лина ăна пысăках мар чăматан тыттарчĕ те:

– Çырăва илтĕн пуль, мана «Çăлтăра» ярассĕ, Максăм, – терĕ. – Сана курма çеç килтĕм. Паянах каятăп. Çуранах. Вăхăт пулсан ăсатса яр кăштах.

Вĕсем Тымар çулĕ çине тухрĕç.

– Çапах та, Максăм, каçаратăн-и эсĕ мана Шупашкартишĕн? – тăп чарăнса тăчĕ Лина юлашкинчен. – Кала тĕрĕссине: каçаратăн-и?

Максăм хулпуççине хăпартса илчĕ, хĕр çине «ăнланмастăп кун пек ыйтăва» тенĕн пăхрĕ.

– Хăвах ăнланма тивĕç, Максăм. Сана куриччен качăçке вăл манăн, пĕрле çÿренĕскер. Хамăр ялсем – Тит Милов. Практика хыççăн тăнран ячĕ. Авланасшăн. Мана качча илесшĕн. Атте-анне те хирĕç мар. Хĕрхентĕм эпĕ ăна.

– Тухас пулать апла...

– Эсĕ тата, Максăм, эсĕ?

– Эпĕ... Эпĕ те авланас тенĕччĕ, Лина. Ун чухне санпала шăпах çавăн çинчен каласса татăлма васканăччĕ.

– Эх, мана, ухмаха, мĕн туса хутăм! Сана та юрататăп, ăна та манаймастăп, – тесе чăп! тутарчĕ вăл каччăн çилпе кушăрханă тутинчен.

Максăм кĕлетки ток çапнă пек сăрăлтатса илчĕ. Юпа пек хытса тăчĕ вăл пĕр вырăнта, хĕр вăрман кĕтессинче курăнми пуличченех тапранмарĕ. Çурхи Тымар çулĕ Линăна малалла, курăнман çĕрелле, илсе кайрĕ.

Максăм Крутов Чулхулара иккĕмĕш хут ĕнтĕ. Чăн малтан вăл партин аслă шкулĕнче калаçура пулчĕ. Комиссире ларакансем панă тĕрлĕ енлĕ ыйтусене хăюллăн та курăмлăн хуравларĕ. Çавăнпах пуль ăна хирĕçлесе никам та иккĕленÿллĕ сăмах хускатакан пулмарĕ. Унтан тавраннă хыççăн обкомран савăнăçлă хыпар пĕлтерсен вăл авалхи хулана вĕренме кайма хаваспах хатĕрленчĕ.

Çирĕм республикăпа облаçран тĕрлĕ халăх çынни ăсланать кунта. Вĕренекенсенчен ытларахăшĕ – партипе комсомол тата советсен ĕçĕнче пулнă çамрăксем. Итлекенсене ушкăнăн-ушкăнăн пайланă, кашнинче çирĕм çын, вăл шутра – ик-виç хĕрарăм.

Вĕренĕве Крутов хавас кăмăлпах, ăнтăлсах тытăнчĕ. Лекцисене сиктермесĕр çÿрерĕ. Шкулти вулав залĕнче марксизм-ленинизм классикĕсен кĕнекисене ытларах тытса ларчĕ, хăйне мĕн кирлине вĕсенчен çыра-çыра илчĕ. Библиотеки кунта питĕ пуян. Халиччен куçпа курман, алăпа тытса пăхман сайра-хутра тĕл пулакан кĕнекесенчен вăл уйрăлма пĕлмерĕ. Общежитие таврăнсан хĕрлĕ кĕтесе улăхать, кĕнекесенче мĕн çырнине пуçа хывать, лекци конспекчĕсене тепĕр хут пăхса тухать. Ыранхи виçминехи занятисене хатĕрленсе çитнĕ хыççăн та унăн ирĕклĕ вăхăт тата юлать.

Семинарсемпе коллоквиумсене пушă пуçпа пырса ларакансене Крутов чăтма пултараймасть. Явапсăрлăха мĕнпе те пулин витерес тесе унашкаллисем ялан çĕр тĕрлĕ сăлтав шыраççĕ, хăйсем хаклă вăхăта кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте пустуй çунтараççĕ. Шкулта чăваш ачисем те чылайăн, кашни районпа хуларанах.

Хăй ĕçленĕ çĕртен вăл пĕррехинче çыру илчĕ. Колхоз председателĕ ăна васкавлăн яла чĕнет. Декан вăл ыйтнине хирĕçлемерĕ.

Чулхула-Хусан пуйăсĕнчен Максăм ирпе Вăрманкас станцийĕнче анса юлчĕ. Тусне илме янă çăмăл автомашина вăхăтра çитрĕ. Шофер ăна тÿрех хăй пурăннă хваттере ăсатрĕ. Çула май кулкаласа пычĕ. Вăтам шкула çамрăк учительницăсем килсе тулнă. Ульки акка «Пĕри кин майлах, Максăм валлиех пăхса усратăп-ха», – тесе кулкаларĕ. Чăнахах иккен.

Ульки акка пĕчченех, хваттер хĕрĕ шкулта. Ватă çын ăшталанса ÿкрĕ, тÿрех апат сĕнчĕ, хырăм туттине пĕлсен каçпа ăçта çывратасси пирки калаçрĕ. Вăл ăна хăй пÿлĕмне вырттарать. Тельман тусне хăйсем патĕнче усратăп тенине илтсен Ульки акка кÿреннĕ пек пулчĕ. Хĕре ку та ырласа-мухтаса çеç пĕтерчĕ. Максăма пÿлĕме илсе кĕртсе вăрттăн систерчĕ:

– Ку, леш, председательсем патне килекен явкаланчăк мар, суççем урăх йышши хĕр. Кайиччен паллаштарăп-ха. Темшĕн, сана вăл кăмăла каяссăн туйăнать. Эп вара мĕн тери хĕпĕртемелле, ывăлăм...

Ульки акка патĕнчен тухсан вăл уйсем тăрăх курса çÿрерĕ, ĕçсемпе паллашрĕ. Халăх хĕрсех çĕрулми кăларать, хăмла татать, вылăх апачĕ хатĕрлет...

Каçпа Крутов председательсемпе концерта кайрĕ. Кĕç зала палламан хĕрсем шавласа кĕчĕç. Пĕр хĕрĕ çумĕнчи çемçе пукан пушшине асăрханăскер Крутов, ыйтса, унпа юнашар вырнаçрĕ. Вăл йĕп çинчи пек ларчĕ, унтан, кăшт вăхăт иртсен, хĕр енне вăрттăн пăха-пăха майĕпен чунне лăплантарчĕ.

Хĕр те çумри палламан çын çине пĕр-икĕ хутчен тĕсесе пăхрĕ. Çавăн чухне Максăм куçĕ унăн çырă куçĕпе самантлăха тĕл пулса йăлкăшса илчĕ. Çиçĕмле туйăма сиссе иккĕшĕ те пуçĕсене часрах аяккалла пăрчĕç. Хĕр пуçне шупка тутăр çыхнă. Тутăрĕ айĕнчен хулăнах мар çырă çÿç пайăрки кукăрăлса тухса тăрать. Нимĕнле сăрă таврашĕ курăнман тап-таса пит-куç. Çÿхе кулăллă тути, вăр çаврака пит çăмартийĕсем тата тÿрĕ сăмси килĕшÿллĕн хускалса илеççĕ, шап-шурă вĕтĕ шăлĕсем илемлĕн курăнаççĕ. Хĕр сцена çине хавас кăмăлпа пăхать. Çак сăн качча тĕлĕнтермĕшлĕн кăмăла кайрĕ. Хĕре унăн татах култарас килчĕ, анчах концерт номерĕ улшăнчĕ. Максăм ăна вăрттăн сăнама пăрахмарĕ. Мăйĕ çинче хĕрĕн тур палли пур, кĕтеслĕхсемпе тăвăткалсем ÿкернĕ чечеклĕ кĕпи йăлтах хуплаймасть те, ăна каччă лайăххах курать. Кĕпе çийĕн вăл хура тĕслĕ пиншак тăхăннă. Пиншак лацканĕ çинче ромбик пур. Уринче – пуçĕсем çуталарах панă сарă пушмак. Ку хĕр тумпа аташманни е аташма пултарайманни тÿрех курăнать.

Максăм концерт вĕçленичченех те хĕре пĕр сăмах хушаймарĕ, чаршав хупăнсан тин вăл унран ыйтрĕ:

– Сирĕн хăш еннелле каймалла?

– Хурăнваралла, – çемçен хураварĕ хĕр. – Эсир хăвăр ăсталла çул тытатăр тата?

– Эпĕ те сирĕн çулпах, – вăтанса пуçне чикрĕ Максăм.

**(Малалли пулать).**

## САВĂ СĔВЕМĔ

**ВЛАДИСЛАВ ПАСТУХОВ-АНАТКАС**



### Иван Яковлев халалĕ

Евангели пек маншăн
Яковлев халалĕ:
Усса вулатăп та –
Унта вара тĕнче çине тĕнче,
Анчах пĕр алăкран кĕретĕп халĕ,
Тăратăп кĕç теприйĕн умĕнче.

Пурне те çырнă
Ман валли пекех ятарлăн,
Чуна пырса тивеççĕ
Кашниех.
Калаканнин шăпийĕ пулнă тарлă,
Вăл курнă йÿççине ытлашшипех.

Мĕскершĕн-ши эпир
Пĕр-пĕринчен писетпĕр,
Хăçан пĕтет-ши
Ăмсану та кĕвĕçÿ?

Чăваш, чăваш... Çак халал хисепленмесĕр
Ăçтан-ха пурнăçлатăр тивĕçÿ?

* * *

*Мария Шестовăна*

Патша Шупашкара, пуç янă хаклă çыннăмăр,
Аван пек-и сана Чăваш çĕршывĕнче?
Сăвапла тăпруна миçе хутчен-ши усрăмăр
Тупас пек çумăнта çĕрте çĕрми ĕнче.

Çуркуннепе кунта саркайăксем юрлаççĕ,
Çапаççĕ çырана мăн Атăл хумĕсем.
Мускав енчен, Хусан енчен киле-киле тухаççĕ
Тăпрапала хупланайми истори сассисем.

Шыв юхăмне çĕнсе
Çĕмрен пекех хăпарнă
Пăлхавар Расăн, Пăкачав хусахĕсем.
Кала, Марье аппамăр, мĕн ухтарнă
Çак тухăçри кĕпĕрнере вĕсем?

Тен, аслă чăнлăх йĕррине шыранă
Вĕсем Раççейĕн тĕп ураменче?
Тупăсемпе çÿренĕ Чĕмпĕрĕн – Хусанăн,
Итлес те пăхăнас пек хăйсене тĕнче...

Мĕскер çинче никĕсленет патшалăх?
Тен, сан тăхăмусен тытăмĕнчен?
Кала, Марье аппамăр, пур-и чăнлăх
Çич сий ултавлăх выртнă çĕр çинче?

* * *

*Анна Ахматовăна*

Сире чунăмпала эп туйнă,
Анчах та хăвăра пĕлмен.
Паллашнă та – яланлăх пуйнă, –
Манман пĕрре те ÿлĕмрен.

Эсир мана хавхалантарнă
Çурхи хĕвел асамĕ пек,
Сар кайăк пек çунат эп сарнă,
Пулса эп тăнă кĕл чечек.

Пĕр хĕлхемрен асаплă çулăм,
Хыпса çунтарнă ăшăма,
Кайран шăнса кÿтсен те чунăм
Каллех пултарнă ăшăнма.

Каллех эп тÿпене хăпарнă
Таса сенкерлĕх тĕнчине,
Тăван çĕрпе эп çыхăнтарнă
Хĕвеллĕ туйăм ĕнчине.

* * *

*Кирилл Кириллова*

Кирилл Кириллов – пит маттур ачаччĕ,
Драмăпала камит тишкеревçи,
Çав хушăрах тата ăста çыравçă,
Мĕнпур ÿнер асамçисен евчи.

Чунри кашни хусканăва туятчĕ,
Ялан вăл çул парасшăнччĕ ырра.
Сетнерпеле Нарспин таса хăвачĕ
Вут-хĕм сапать пуль теттĕмччĕ унра.

Пĕррехинче çÿреттĕмĕрччĕ виççĕн:
Кириллов, эпĕ, Хветĕр Акивер,
Çурхи хĕвелпеле сипетлетÿçĕн
Сапатчĕ ырă шăршă ешĕл сквер.

Пирте хăмла пек ешерет чăвашлăх,
Тăван чĕлхе, ÿнер, тăван сăмах...
Этеплĕх тивлетне çĕклетчĕ яшлăх,
Тăватчĕ ырă туйăмран ахах.

Анчах, Кириллăмăр, кĕçех эс кайрăн,
Унта, тен, чĕнчĕç «кирлĕрех» тесе.
Ятупала, чысупала пуç тайрăн
Чăваш иленнĕ ырă кĕтесе.

Чие те çĕмĕрт халь каллех шап-шурă,
Садра – сар кайăксем те шăпчăксем,
«Шур перчетке», эс ун чух пуçланă юрă,
Таçтан килсе чунра сапать хĕлхем.

* * *

*Юхма Мишшине*

Çăмăл мар килпе сывпуллашмашкăн,
Çăмăл мар уй хапхинчен тухма.
Пурпĕрех хăйĕн çулне усмашкăн
Вăй çитерчĕ пуç усми Юхма.

Талвире курса вăл алă пачĕ,
Сăмах пачĕ юнашар утма,
Ĕшенет хăш чух чух чĕре çуначĕ
Такăнмасть çапах хастара Юхма.

Чăваш тăвĕн тăрринче çут çăлтăр,
Ун патне май пур-ши улăхма?
Çавăнта епле-ха ан хăпартăр
Пĕр тĕллев тытсан патвар Юхма?

Чăн Пегас çилхийĕ хĕлĕх евĕр,
Чăн Пегас пĕлеймĕ ывăнма.
Чăваша çĕклетĕр ĕмĕр-ĕмĕр
Ӳлĕмрен те, халĕ те Юхма.

# Казах хĕрĕсем ют çĕршыв каччисемпе çемье çавăраççĕ

## Ку вырăнти чиновниксене пачах çырлахтармасть

### Çĕре каялла тавăрасшăн

Çавăнпах правительство членĕсем саккунсене улăштарасшăн. Казахстан ял хуçалăх министрĕ Аскар Мырзахметов, калăпăр, ют çĕршыв çыннисене тара панă çĕр лаптăкĕсене каялла тавăрмалли çинчен калать. Министра ĕненес пулсан, халĕ казахсен 65 пин гектар çĕрĕпе ют çĕршыв çыннисемпе компанийĕсем усă кураççĕ. "45 пин гектар – предпринимательсен аллинче. Вĕсен пĕр пайне патшалăха каялла тавăрма май килнĕ. 12,3 гектар – Ливан тата ытти çĕршывпа пĕрле йĕркеленĕ предприятисен аллинче. Вĕсене тавăрас ыйтăва суд пăхса тухать".

Мĕн пулса иртет-ха Казахстан çĕрĕнче? Мĕншĕн чиновниксем пĕр кĕтмен çĕртен чан çапаççĕ? Хуравĕ ансат – казах пикисем... Китай каччисемпе çемье çавăраççĕ.



### Кĕрӳсем тивĕçтермеççĕ

Gazaguni.kz интернет-хаçат Мухтар Шаханов поэт сăмахĕсемпе паллаштарать. Поэт ку çĕршыври 24 пин пике китаецсене качча тухнишĕн пăшăрханнине пытармасть. Çакăн пирки вăл республикăри çĕр реформин черетлĕ ларăвĕнче сăмах хускатнă. "Мĕн чухлĕ калатпăр ĕнтĕ – çĕре çĕршыв гражданĕсене тара пама юрать, анчах та çакна манмалла мар. Паян пирĕн 24 пин хĕр Китай джигичĕсене качча тухнă. Ку пулăм, çитменнине, вăй иллсех пырать. Калăр-ха мана, çав çĕршыв пĕр-пĕр каччи – пирĕн кĕрӳ – миллион-миллион гектар çĕр тара илмессе кам шантарма пултарать? Ун пек пулса иртсен кунта – çав çĕр çинче ĕçлеме – китаецсем килсе тулмасса тата кам шантарать? Çавăнпа та Çĕр кодексĕнче хутăш çемьесен хăрушлăхне шута илмеллех тесе шухăшлатăп".

### Халăх сурать

Асăннă комиссин виççĕмĕш ларăвĕ çинчен abai.kz страницăра Бейбут Койшыбаев çырать. Унăн сăмахĕнче халăх сурсан кӳлĕ пуласса шанни, тепĕр енлĕ, çынсен чун пăшăрханăвĕ чиновниксем патне çитессе кĕтни, палăрать.

"Виççĕмĕш ларура та комисси членĕсем çĕре ют çĕршыв çыннисене парас кăмăлли сисĕнчĕ. Нумайăшĕ çĕнĕ технологисемшĕн, ют çĕршыв инвестицийĕшĕн сасăларĕ. Вĕсем çĕре ахаль вырттарасшăн мар. Çĕр кодексне улшăнусем кĕртес ыйтăва – ăна вара халăх, МИХ хатĕрсем сĕннĕччĕ, влаç ячĕпе усă çырусем çырнăччĕ – пăхса та тухмарĕç".

### Каччă çитмест...

Çак статья Интернетра нумай тавлашу çуратнă. Нумайăшĕ пикесене сивлесе çырнă – тăмсайсем вĕсем имĕш, патриотсем мар. Форумра çыракансем ку хĕрсенчен Казахстан гражданствине туртса илме сĕнеççĕ. "Вĕсене вырăнти каччăсем çитмеççĕ-им?" – тесе тĕлĕнекен те пур.

Аналитика пĕтĕмлетĕвне хута яма хăтланакан та тупăнать форумчансен хушшинче. Вĕсен шухăшĕпе, ку çĕршыври пикесене коллективизаци вăхăтĕнче Казахстан АССРĕнчен Китая тарса кайнисен йăхĕнчи йĕкĕтсем качча илме тăрăшаççĕ. Шăпах çакăн пек пĕр историпе паллаштараççĕ. Каччă паспорт тăрăх – китаец. Юнĕ-йăхĕ – казах. Хăйне мĕн ас тăвассах Казахстана таврăнса вырăнти хĕрпе çемье çавăрма ĕмĕтленсе пурăннă. Палăртнине пурнăçланă.

"Ratel.kz" страницăна Фейсбукра вулакансенчен пĕри хăйĕн шухăшне çапла палăртнă. "Пирĕн çĕршыври статистикăна шута илеççĕ-ши китаец-кĕрӳсене хирĕçлекенсем? Тулли мар мĕн чухлĕ çемье пирĕн? Арканнă миçе çемье? Ĕççĕр тăрса юлнă арçынсене шута илнĕ-и тата? Çĕршывра миçе арçын икĕ е ытларах çемьене тăрантарса пурăннине кам пĕлет? Казах хĕрĕсем ытти наци каччисемпе çемье мĕншĕн çавăрнин хуравне çак ыйтусенче шырамалла та.

Кашни хĕрарăм йĕркеллĕ каччă кайса ача çуратасшăн. Анчах та çапла тума пурин те майĕ çук. Çакна питĕ лайăх ăнланатăп эпĕ. Хамăн хĕре 22 çулта качча патăм. Васкарăм. Куратăп вĕт-ха, йĕркеллĕ хусахсен шучĕ çулсерен чакса пырать. Хăйĕнчен 20-30 çул аслă арçынна парас килмест вĕт-ха хĕре. Çавăнпа та хамăрăн арçынсенчен ыйтас килет – пикесемпе тимлĕрех пулăр-ха, еркĕн вырăнне ан хурăр вĕсене, арăм ролĕнче курса çемье çавăрăр. Хĕрĕн çие юлчĕ тĕк пăрахса ан тарăр вĕсенчен. Хутшăнусемшĕн яваплăха арçыннăн хăйĕн çине илмелле. Ун чухне çамрăксем ирех çемье çавăрасси те, хĕрсем ют çĕршыв каччисене тухасси те, еркĕнлĕх ыйтăвĕ те татăлĕччĕ".

/"Ratel.kz", "Yvision.kz"/.

# Çăлтăр тени пуян-и?



**Пуян çынсен списокне хатĕрленипе палăрнă Forbes журнал черетлĕ рейтинг янтăланă – унта тĕнче шайĕнчи çăлтăрсене пухнă. Çак списока кам тата мĕн чухлĕ тупăшпа лекнĕ-ха?**

Евро-2016 тата социаллă сетьсен тĕп геройĕ Криштиану Роналду унта çакланмасăр юлман паллах. 31 çулти португалец тĕнчери чи пуян футболист пулни усăмланнă – Америка МИХ кăларăмне ĕненес тĕк, Криштиану çулталăкра 88 миллион доллар ĕçлесе илнĕ. Чăн та, футбол çăлтăрĕ асăннă рейтингра çапах та пĕрремĕш вырăн йышăнайман – Фил Макгроу паллă телеертӳçĕпе иккĕшĕ тăваттăмĕш вырăна пайланă. Роналду тĕп конкуренчĕ 29-ти Лионель Месси вара топ-10 йыша çакланнă. Унăн çулталăкри тупăшĕ – 81,5 миллион доллар.

Рейтинга пуçлаканни – Америка паллă юрăçи Тейлор Свифт. Унăн тупăшĕ 170 миллионпа танлашнă. Çакă кăсăклă, иртнĕ çул кăна 26-ри Тейлор çак списокра 80 миллионпа 8-мĕш вырăнта пулнă.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене One Direction ушкăн /110 млн $/ тата Джеймс Паттерсон çыравçă йышăннă /95 млн $/.

Çăлтăр рейтингĕ тесе палăртнă списокра малтанхи 10 вырăнта, паллах, çăлтăрсемех – Кевин Харт шӳт ăсти /87,5 млн $/, Говард Стерн телеертӳçĕ /85 млн $/, Адель юрăç /80,5 млн $/. Мадоннăпа /76,5 млн $/ Рианна /75 млн $/ – 12 тата 13-мĕш вырăнсенче.

Forbes чи пуян çăлтăрсен списокне çулталăкра пĕрре хатĕрлесе пичетлесе кăларать. Паллă çынсен тупăшне шутланă чухне Nielsen социологи компани, çавăн пекех Box Office Mojo и IMDB сайтсен кăтартăвĕсене шута илеççĕ – вĕсем çăлтăрсем кинопрокатран мĕн чухлĕ услам илнине сăнаççĕ.

Тейлор Свифт – Америка кантри-поп-юрăçи, автор тата актриса. 2010 çулхи кăрлач уйăхĕнче Nielsen SoundScan ăна чи ăнăçлă "цифрăллă юрăç" тесе палăртнă.

Тейлор Свифта 200 премипе чысланă. Çав шутра – вунă «Грэмми», вунпилĕк American Music Awards, пĕр Emmy, пĕр BRIT Awards тата çирĕм икĕ Billboard Music Awards. 2015 çул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх, юрăç тĕрлĕ çĕршывра 40 млн альбом сутнă: вĕсенчен 27,1 млн Америкăра. Çавăн пекех Свифт 130 млн сингл сутнă.

/"ИА REGNUM", Леди Mail.Ru/.



# Çилленмен упăте



1996 çулхи çурла уйăхĕнче Иллинойс штатĕнче инкек пулса иртнĕ – виçĕ çулти арçын ача пилĕк метр çӳллĕш хӳме урлă Бинти Джуа ятлă тем пысăкăш горилла вольерне кĕрсе ӳкнĕ. Арçын ача бетон урайне çапăннипе тăн çухатнă, çавна май хускалмасăр выртнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ тата зоопарка курма пынисем малалла мĕн пуласса сывламасăр тенĕ пек кĕтнĕ. Юрать-ха Бинти Джуа хăйне канма кансĕрленĕшĕн çилленмен. Вăл ача патне пырса унăн пуçне кăшт çĕклесе пăхнă, сурана сăнанă. Каярахпа зоопарк ĕçченĕсем çитнĕ. Вĕсем ачана картаран чăрмавсăрах илсе тухнă.

* * *

Нумаях пулмасть вара Америка тепĕр штатĕнче, Цинциннати зоопаркĕнче, çакăн йышши ĕç-пуçах пулса иртнĕ.

Ашшĕ самантлăха айккинелле пăхнипе усă курса виçĕ çулти арçын ача карта хушăкĕпе хĕсĕнсе кĕнĕ, горилласен вольерне ӳкнĕ. 14 çулти упăте асçи ăна алла илнĕ. Видеоӳкерӳре горилла ачана асăрханса шывран кăларни яр-уççăн курăнать. Анчах та Цинциннати зоопарк ĕçченĕсем арçын ачана çăлнăшăн упăтене хальхинче урăхларах "тав тунă" – персе пăрахнă.

Ача вольерта 10 минут пулнă. Упăтене çывăратса ярас тесе нимĕн те туман.

Çак ĕç-пуç тĕнчипе шăв-шав çуратнă. Пурте арçын ачан ашшĕне сивленине пĕлтернĕ, ăна айăплама ыйтнă. Анчах та мĕнле айăп шухăшласа тупма пулать явапсăр арçын тĕлĕшпе? Форума хутшăннисенчен пĕри çапла сĕннĕ – вилнĕ гориллӑн тирне сӳсе илмелле те ăна арçынна тăхăнтартмалла: пурăнтăр зоопаркра, пĕр çирĕм çул, упăтене евĕрлесе...

/Тололо.ру, livejournal.com/.

## И-ХИ-ХИК

– Эсир хăвăрăн кŭршŭсене мĕншĕн наркăмăш панă? – ыйтать судья сарă çŭçлĕ пикерен.
– Эпĕ таракансене пĕтересшĕнччĕ.
– Вара?
– Лавккара вара мана таракансене кŭршĕсемпе пĕрле пĕтерсен аванрах терĕç...

* * *

– Çŭç тăрăх çыннăн кăмăлне пĕлме пулать. Калăпăр, çŭç çемçе – кăмăлĕ те çемçе, çŭçĕ хытă – кăмăлĕ те çаплах...
– Кукша пуçлисем вара мĕнле?
– Эй, вĕсене нихăçан та ăнланса пĕтмелли çук...

* * *

Садике çŭренĕ чух ирхине вăратаççĕ, шкула кайма пуçласан çывăрма памаççĕ, студент çулĕсенче лекцисене ĕлкĕрмелле, ĕçлеме пуçласан кравать çинчен шусах анатăн. Тивĕçлĕ канăва тухсан кăна тăраниччен çывăрма пулать, анчах... ыйхă килмест.

* * *

Ашшĕ 6-ри хĕрĕнчен ыйтать:
– Кам кирлĕ сана: шăллу е йăмăку?
– Никам та, – хуравлать хĕрĕ. – Хамшăн пурăнас килет.

* * *

Манăн арçын тĕнчере те – чи лайăххи. Ирхине 10 хутчен чуптăвать, 20 хутчен ыталать... 100 хутчен "юрататăп!" тесе калать... Шел, садике ытла вăрах пуçтарăнать.

* * *

Пĕчĕк чухне мана: "Вăт ŭссе çитетĕн, ĕçлеме пуçлатăн та санăн вара йăлтах пулать", – тесе лăплантаратчĕç. Ŭссе çитрĕм, ĕçлеме пуçларăм... "Йăлтах" тени вара çаплах çук-ха.

* * *

Чирлемешкĕн... çирĕп сывлăх кирлĕ. Тухтăр палăртнă анализсене, тĕрĕслевсене пурне те пуçтарса та пĕтерейменçĕ унсăрăн...

* * *

Асламăшĕ – мăнукне:
– Санăн çулунта эпĕ ĕçлеме пуçланă.
Мăнукĕ:
– Ан кулян, асанне, санăн çулунта та ĕçлĕп-ха эпĕ.

* * *

Хĕрарăм туслăхĕ пулма пултараймасть. Арçынпа хĕрарăм хушшинче те – туслăх мар.
Пĕтĕмлетŭ. Хĕрарăмсем – туслăх туйăмĕллĕ çынсем мар.

* * *

– Пальма çинчи кокоссене мĕнле пуçтаратăр эсир? – ыйтаççĕ вырăнти çынран.
– Эпир вĕсене ятарласа пуçтармастпăр – вăйлă çилпе хăйсемех ŭкеççĕ.
– Çил пулмасан вара...
– Ну... Вара... Выçлăх пуçланать...

* * *

Дейл Карнеги кĕнекине вуланă хыççăн куна йăл кулнинчен пуçлама тĕв турăм. Ĕçре тăрăшсах пурне те йăл кулă парнелерĕм, чунтанах пек кăтартма тăрăшрăм. Каç еннелле ман пата пуçлăх пычĕ те:
– Ыран та ĕçе ŭсĕр килсен хăвăн ирĕкŭпе кайма ыйту çыр, – терĕ.

* * *

Лавккана каяс умĕн арăмĕ – упăшкине:
– Пелмене кастрюле пĕрерĕн пăрах – çыпăçса ан лартăр.
Килне таврăннă хĕрарăм тарăхнă упăшкине курать – лешĕ улттăмĕш пельмень пĕçерет.

* * *

– Чунăм, ăмăрткайăкăм, эпĕ шухăшларăм та...
– /Вăт чĕмере... Шухăшланă вăл... Ĕçне манăн тумалла вĕт. Пĕлсех тăратăп-ха, ним ырри те калас çук. Юрĕ ĕнтĕ... Вăт "шухăшлакан" хĕрарăм пачĕ Турă э?/ Мĕн пирки шухăшларăн-ха, чечекĕм?

* * *

Ирхи пилĕк сехет. Ача кравачĕнчен макăрнă сасă илтĕнсе каять. Арăмĕ – упăшкине:
– Тăр, санăн черет!
Упăшки:
– Эпĕ черет йышăнман...

* * *

Арăмĕпе упăшки çывăрма выртаççĕ.
– Санăн паян пуçу ыратмасть курăнать...
– Пуç ыратмасть-ха, тем айăкра чикет пек...
– Санăн ку уйăхра куç харши кăна ыратмасăр юлчĕ ĕнтĕ!

* * *

Упăшкана йăпăртлăха ачапа хăвартăм. Упăшка çирĕм çичĕ çулта, ача – виççĕре. Иккĕшне те пĕрер конструктор парса хăвартăм. Каялла таврăнсан упăшка çапах та конструктортан çурт пуçтарнине куртăм. Вăл ачана ун çывăхне те ямасть – мана кăтартас тесе...

* * *

Мечĕк шкул директорĕн чŭречи патне вĕççе те çитеймен-ха, ачасем вара пытанмалла выляма та пуçланă...

* * *

– Анне, атя пĕчĕк йăмăк тунатпăр, – тет хĕрача амăшне.
– Аçу ирĕк памасть вĕт-ха.
– Эпир вăл кайсан вăрттăн тунăпăр, – парăнмасть хĕр пĕрчи.

* * *

– Эсир ĕçе каллех лŭчĕркенчĕк килнĕ. Канмалли кунсенче ĕçнĕ кăна курăнать!
– Çапла çав, ĕçнĕ. Эсир йĕркеллĕ тŭленĕ пулсан апат та çийĕттĕм...

* * *

Автобус чарăнăвĕнче ва-а-атă кинемей ларать. Ури вĕçĕнче – япала çыххи. Аллинче – кĕсье телефонĕ. Кинемей унта пŭрнипе тем тĕккелет. Инçех мар каччă иртсе пырать. Кинемей хайхинчен пулăшу ыйтать – СМС çырмалла иккен. Каччă пулăшма хапăлах пулать, мĕн çырмаллине ыйтать.
– Çыр, – тет кинемей. – "Йĕксĕк. Мана ан шыра. Эпĕ анне патне каятăп..."


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРŬСЕМ

## Саламлатпăр



*Ытарайми çыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, кукамая, асаннене, Елчĕк районне кĕрекен Кĕçĕн Таяба ялĕнче пурăнакан, Нина Александровна ИЗОСИМОВĂНА 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çăлкуç шывĕ пек тапса тăракан вăй-хăват, çирĕп сывлăх, тулли ăраскал, канлĕ ватлăх сунатпăр. Сăну çинче яланах йăл кулă ялкăштăр, турă вăй-хал парса тăтăр, кашни ырă кун телейпе тата савăнăçпа тултăр. Тавах эсĕ пурришĕн, санпа эпир мухтанатпăр, мĕн пур ырришĕн тав тăватпăр.*

*Ырă сунса - мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрŭшĕсем, мăнукĕсем, мăнукĕн ачисем.*

## СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. **Бурение.** Д-ка манипул-м. **Работаем** без выходных. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, кирп. бой, чернозем, навоз. Дешево. Доставка. Т.: 89033581770, 89276689713.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.ГРАВМАССУ,** песок, **щебень, керамзит,** кирп. бой, чернозем. **Дешево.** Доставка. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**13.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича. Д-ка. Т. 89033225766.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой, керамблоки, **кольца. Бурение.** Т. 89613393363.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 89053465671.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича, керамзит. Доставка. Т. 89061355241.

**24.Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ к/б,** пеноблоки. Манипулятор. Тел. 89033220208, 48-02-08.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**58.**Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. Козырьки, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru

**61.Заборы, навесы, беседки, ворота,** решетки. Т. 8-987-737-29-39.

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.

**165.Бетон,** раствор. Д-ка. **Скидки.** Без выходных. Т. 89677906116.

**176.ГРАВМАССУ, песок, навоз** и т.д. Работаем – пн.-сбб. Доставка. Низкие цены. Т. 89278502821.

**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.

**223.ОКНА, теплицы,** обшивка домов. **Двери** стальные. Гарантия 15 л. Скидки 40%. Т. 89196624097.

**235.**Тротуарные **ПЛИТЫ, брусчатку,** экопарковку, песок, щебень, **гравмассу,** цемент. Доставка. Укладка. Скидки. Т. 89033220479.

**237.**Профнастил, металлочерепицу, **сайдинг,** водостоки, утеплители. Скидки. **Доставка.** Монтаж. Замер. Т. 8-903-322-04-79.

**273.Бетон, песок, гравмассу.** Доставка. Т. 8-960-306-32-54.

**311.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича. **Д-ка.** Т. 89050282225.

**497.Бетон, раствор от производителя.** Д-ка. Т. 8-937-382-73-53.

## ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Ĕне, вăкăр,** тына, **сурăх, сысна** амисем. Т. 8-937-014-49-97.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**147.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-967-794-92-82.

**148.Коров, бычков, тёлок, лошадей.** Т. 8-905-197-73-36.

## ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев, скважин.** Дост-м предметы. Т. 8-967-471-50-70.

**41.Фундаментные и земельные работы.** Скидки. Т. 89603063254.

**43.Бурение скважин** "под ключ". Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**125.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-906-381-60-37.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**213.Бурение скважин на воду.** Т.: 8-962-321-17-80, 21-17-80.

**236.Кровельные, фасадные работы.** Установка забора. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**349.Услуги мини-экскаватора.** Монтаж водопровода. Канализации «под ключ». Т. 89278625531.

**421.Пенсионные споры,** обжалование решений в суде. Т. 372874.

**500.КРОВЛЯ КРЫШИ,** плотницкие работы. Скидки. Т. 8-937-397-24-42.

## ĔÇ/РАБОТА

**484.Требуются МОНОЛИТЧИКИ** в Московскую обл. Т. 89603038489.



« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламӑсăр тŭлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшŭллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 15.07.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 6590. Заказ 2449.